ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

# ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Январь
11
ЭРНЕКУН
№ 8 (8660)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

## ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Ф. Романов.—Коллективлă договор (1 стр.).
ВЛКСМ Центральнăй Комитетĕнче. Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнчи çамрăк рабочисемпе специалистсен пуçарăвĕ çинчен (1 стр.).
Б. Леонтьев.—Ленинизм идейисем халăхсен коммунизм патне çитмелли çулне çутатса тăраççĕ (2 стр.).
Н. Егоров.—Пионер организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн. Ишлей районĕнчи учительсен январьти канашлăвĕнчен (2 стр.).
Корейăри ĕçсем (3 стр.).
Е. В[illegible]ов.—Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз опытне—пур колхозсене те (3 стр.).
Америка авиацийĕн Корейăри тискер ĕçĕсем (3 стр.).
Америка империалисчĕсен агрессиллĕ ĕçĕсем пирки «Женьминьжибао» хаçат мĕн çырать (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).
Сицилири ĕççыннисем совет делегачĕсене саламлаççĕ (4 стр.).
Я. Осипов.—Шкул ачисен хĕллехи спартакиади вĕçленчĕ (4 стр.).

## Вырăнти Советсен вăрман хатĕрлевне тимлĕн ертсе пымалла

Вăрман хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарас ĕçре вырăнти Советсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Тăван çĕршыва йывăç ытларах парас, умра тăракан задачăсене чыслă пурнăçлас тĕлĕшпе вырăнти Советсен ĕçе большевикла ертсе пымалла. Çакă вăл Советсен халăх хуçалăх задачисене пурнăçлас ĕçри тĕп тивĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Пирĕн республикăри чылай районсем Тăван çĕршыв валли йывăç хатĕрлемелли плана чыслă тултарса пыраççĕ. Муркаш районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, парторганизаци ертсе пынипе, кĕркуннепе хĕллехи сезонра вăрман хатĕрлемелли плана 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. Çĕмĕрле, Комсомольски, Чкаловски районĕсем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн пыракан ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Муркаш район Совет исполкомĕ вăрман хатĕрлевĕн сезонĕ пуçланиччен нумай малтан организациллĕ-массăллă ĕçсем туса ирттернĕ. Ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕсенче иртнĕ çулсенчи çитменлĕхсене шута илсе тивĕçлĕ выводсем турĕ, малашнехи ĕç планне палăртнă. Канашлу итогĕсене колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлехи пухăвĕсенче сӳтсе явнă. Район Совечĕн исполком ларăвĕсенче ял Совет председателĕсен отчечĕсене итленĕ, палăрнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме кирлĕ майсем йышăннă. Ярапайкасси ял Советне кĕрекен Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз малтанхи вăхăтра вăрман хатĕрлевĕнче çителĕксĕр ĕçленĕ пулнă. Район Совечĕн исполкомĕ ял Совет председательне çакна вăхăтра асăрхаттарнă, вăрман хатĕрлекенсем хушшинче ĕçлеме депутатсене уйăрнă. Вĕсем хăйсен ĕçĕсенче паха тĕслĕхсем кăтартнă. Ял Совет председателĕ депутат Дашков юлташ вăрмана касакансен бригадине ертсе пынă, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăмăрту пуçарнă. Колхоз вăрман хатĕрлемелли плана 105 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах республикăри чылай районсем вăрман хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарассишĕн çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе Елчĕк, Кувакино, Ишлей районĕсем кая юлса пыраççĕ 1952 çулхи январĕн 5-мĕшĕ тĕлне Елчĕк районĕ йывăç хатĕрлемелли плана 25 процент, каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана 28 процент кăна тултарнă.

1951 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшне çитиччен республикăра çулталăкри вăрман хатĕрлемелли плана тултарса çитермелли стахановла вунăкунлăх пулса иртрĕ. Вунăкунлăх вăхăтĕнче нумай вăрманпромхозсемпе районсем ĕçре чылай çитĕнӳсем турĕç. Анчах та вунăкунлăх иртсен вăрман хатĕрлес ĕç республикăра палăрмаллах вăйсăрланчĕ. Январĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче Вăрнар районĕнчи колхозсем пурĕ те 55 кубометр кăна йывăç турттарса кăларнă Халĕ вăрманта колхозниксем уйрăмах йывăç турттарнă çĕрте сахал ĕçлеççĕ.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултарма пур условисем те çителĕклĕ. Вăрман хатĕрлекен предприятисенче автомобильсемпе пăравуссем, трелевочнăй тракторсемпе лебедкăсем тата ытти механизмсем нумай ĕçлеççĕ. Вăрман промышленноçне Тăван çĕршыв машинăсем çителĕклĕ парса тăрать. Вĕсемпе туллин усă курас ĕçе организацилесси—советсен пысăк ĕçĕ.

Вăрман хатĕрлевĕ хăйĕн ответлă тапхăрне кĕчĕ. Республикăри малта пыракан район Совечĕсемпе ял Совечĕсен паха опычĕпе ĕçре анлă усă курса, плана срокчен тултарассишĕн кĕрешĕве куллен вăйлатса пымалла.

Тăван çĕршыва йывăç хатĕрлесе парас ĕçе ертсе пырасси—совет органĕсен пысăк задачи пулать. Исполкомсемпе яланхи комиссисем пулăшнипе, депутатсемпе актив çине таянса ĕçленипе вырăнти Советсен социализмлă обязательствăсене пурнăçлассишĕн куллен тăрăшмалла.

Вăрман хатĕрлев планне ăнăçлă тултарас ĕçе Советсен культурăпа çутĕç учрежденийĕсене анлă хутшăнтармалла. Клубсен, вулав çурчĕсен, хĕрлĕ кĕтессен культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатса пымалла, вăрман ĕçлекенсем патне вăхăтра хаçатсемпе журналсем çитермелле, спектакльсемпе постановкăсем лартса парас ĕçе организацилемелле.

«Чăвашвăрман» трест предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, колхозниксемпе колхозницăсем, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, аслă Сталин умĕнче пысăк обязательствăсем илчĕç. Ку обязательствăсенче 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи сезонра вăрман хатĕрлев планне мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе 100 пин кубометр йывăç пама пулчĕç. Вăрман хатĕрлес ĕçе лайăхлатса ĕçе юрăхлă йывăç планра палăртнинчен 10 процент ытларах кăлармa, ĕç тухăçлăхне 102 процент тултарма сăмах пачĕç. Çавăн пекех вăрманта ĕçлекенсем механизмсемпе ĕçлемелли плана пур енĕпе те планран ирттерсе тултарма обязательствăсем илчĕç. Сталин юлташ умĕнче илнĕ обязательствăсем тăрăх вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсен йăлапа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатмалла.

Аслă Сталин умĕнче илнĕ социализмлă обязательствăсене чыслă пурнăçлас ĕçе ертсе пырасси—Советсен тивĕçĕ. Вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче анлă сармалла.

Вăрман хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарасси—Советсен паянхи кун тăракан тĕп задачисенчен пĕри.

Вăрман хатĕрлевĕнче социализмлă ăмăртăва анлă сарар! Тăван çĕршыв умĕнче илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлар, халăх хуçалăхне пысăк пахалăхлă йывăç хатĕрлесе парар!

# Совет Союзĕ тăрăх

## Çуртсене куçармалли механизмсем

Куйбышевпа Сталинград гидроэлектростанцийĕсен районĕсенче шыв тулмалли вырăнсенчен вуншар пин çурт урăх вырăна куçарса лартмалла пулать. Çуртсене пăсса çĕнĕ вырăна куçарнă чухне вăхăт нумай иртет. Çак ĕçе çăмăллатма, строительство материалĕсене перекетлеме СССР Архитектура академийĕн коллективĕнчи инженерсемпе наука работникĕсем çуртсене пăсмасăр çĕнĕ вырăна куçармалли май тупнă. Çуртсене пăсмасăр çĕнĕ вырăна илсе каймалли механизмсене туса хатĕрленĕ тата ĕçре тĕрĕслесе пăхнă.

Çав механизмсене гусеницăллă тракторпа ĕçлеттереççĕ, çуртсене çул çинче сехетре 7—10 километр хăвăртлăхпа илсе пыраççĕ. Ку механизмсемпе çулла та, хĕлле те çуртсене урăх вырăна куçарса кайма пулать. Куçарса каймалли çурта çĕклеме, çĕнĕ вырăна илсе çитерме тата вырнаçтарса лартма мĕн пурĕ те темиçе сехет çеç вăхăт кирлĕ.

Халĕ архитектура академийĕн строительствăра кирлĕ техника тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕ çуртсене куçармалли механизмсене нумай туса кăларма чертежсем хатĕрлет. Çуртсене куçармалли механизмсене çĕршыври темиçе заводра туса хатĕрлеме тытăнаççĕ. (ТАСС).

Çурçĕр Осетин АССР-ĕ. Кунта Беканск гидроэлектростанцин иккĕмĕш черетне туса пĕтерсе ĕçе янă. Гидростанци Ардонски, Дигорски, Даргкохски тата Кировски районсенчи колхозсене электричество энергийĕ парса тăрать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: гидроэлектростанцин иккĕмĕш черетне ĕçе янă ятпа пухăннă митинг.

В. ХАРЬКЕВИЧ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

## Колхозри культура учрежденийĕсем

ЧЕРКАССК, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Черкасски районти Ленин ячĕпе тăракан пĕрлешсе пысăкланнă колхоз—миллионер-колхоз. Çак колхоз хуçалăхĕ нумай отраслĕллĕ пысăк хуçалăх пулса тăнă.

Колхоз хуçалăхĕ ӳссе пынă май ял культури те ӳссех пырать. Колхозăн чаплă клуб пур. Унта драма кружокĕн вăйĕпе спектакльсем лартаççĕ, концертсем ирттереççĕ. Клубра кашни эрнере икĕ хут кинокартинăсем кăтартаççĕ.

Колхозра библиотека уçнă. Библиотекăра В. И. Ленинпа И. В. Сталин произведенийĕсем, Мичурин, Вильямс, Лысенко кĕнекисем пур, илемлĕ литература та нумай. Клубпа библиотека работникĕсем уйхир бригадисенче тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем валли куçса çӳрекен библиотекăсем уйăрнă.

## Строительствăра малта пыракансене преми панă

Иртнĕ çулта Мускав облаçĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕхсене усрамалли çуртсем нумай лартнă. Ĕнесене, сыснасене, сурăхсене тата лашасене усрама—пĕтĕмпе 100 пин пуç выльăх-чĕрлĕх усрамалăх çĕнĕ çуртсем тунă.

Нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕхсене усрамалли çуртсем лартас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Сăмахран, Волоколамски районĕнчи колхозсем строительство планне нумай ирттерсе тултарнă. Луховицки районта та выльăх-чĕрлĕхсене усрамалли çуртсем 30 ытла лартнă. Халĕ çак районта тата 16 çурт тăваççĕ.

Донски, Гремячевски, Серебряно-Прутски, Раменски тата Химкински районсенчи ялхуçалăх артелĕсем те выльăх-чĕрлĕхсене усрамалли çуртсем лартмалли плана нумай ирттерсе тултарнă.

Ĕççынни депутачĕсен Мускав область Совечĕн исполкомĕ çав районсенчи колхозсенче строительство ĕçĕнче малта пыракансене преми панă. (ТАСС).

## Ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çĕнĕ фермăсем

КУРСК, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Обществăллă выльăх-чĕрлĕхрен тупăш ытларах илмелле пултăр тесе, облаçри колхозсем ăратлă выльăх-чĕрлĕх нумай туяннаççĕ. Иртнĕ çулта облаçри районсене ăратлă выльăх-чĕрлĕх—ĕнесемпе вăкăрсем, сыснасем тата сурăхсем план тăрăх палăртнинчен чылай ытларах кӳрсе килнĕ. Колхозсенче ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме 83 çĕнĕ ферма организациленĕ.

1952 çулта облаçра ăратлă выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетме тата 123 ферма организацилеççĕ.

## Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ

ЛЕНИНГРАД, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ленинградра В. И. Ленинăн тĕп музейĕн филиалĕ тата музей-хваттерсем пур. Музейсенче Владимир Ильич Ленинăн Петербургри революциллĕ ĕçĕсене кăтартса паракан çĕнĕ материалсем пухăнса пыраççĕ.

Музейăн Владимир Ильич Ленин ют çĕршывсен вăрçăллă интервенцийĕпе граждăн вăрçи вăхăтĕнче ĕçленине кăтартса паракан пайне çĕнĕ материалсем чылай пухнă Кунта çамрăк Совет республикине пăвса парахма тăрăшнă Англипе Америка, Франци тата нимĕç агрессорĕсене тăрă шыв çине кăларакан документсем нумай. Документсем Америкăри империалистсем Советлă Российăна хирĕç хĕçпăшаллă интервенци организациленине тата вĕсем Российăна оккупацилес ĕçе хутшăннине кăтартса параççĕ.

Иртнĕ çулта В. И. Ленинăн тĕп музейĕн филиалĕнче тата музей-хваттерсенче 600 пин çын ытла пулнă. Экскурсантсем «В. И. Ленинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен», «В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ» ятлă темăсемпе, çавăн пекех тата «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» темисем тăрăх лекцисем итленĕ. Ленин кунĕсене хатĕрленнĕ май çак кунсенче музейсене халăх уйрăмах нумай пырать.

## Мускав—аслă стройкăсем валли

Январĕн 9-мĕшĕнче Мускаври трансформаторсем тăвакан завод Сталинградри гидроэлектростанцие тунă çĕре икĕ пысăк трансформатор ярса панă. Çак трансформаторсем—1952 çулхи заказ тăрăх Атăл çинчи аслă стройкăсем валли тунă малтанхи агрегатсем

Предприятисен коллективĕсем аслă стройкăсен çĕнĕ заказĕсене пурнăçлассишĕн пысăк хăватпа ĕçлеççĕ. Цимлянски гидроузел валли электричество машинисем пухакан цехра нумай рабочисем сменăри нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Çĕнĕ çул пуçлансан малтанхи эрнере столицăри трансформатор завочĕ Цимлянски гидроузел валли хăватлă агрегатсем 10 ярса панă.

Мускаври вуншар промышленность предприятийĕсем Атăлпа Днепр çинчи гидроэлектростанцисен, Туркменири тĕп каналăн тата «Волгодонстройăн» çĕнĕ заказĕсене пурнăçлама тытăннă. Вĕсем автомобильсем, строительствăра кирлĕ механизмсем, электричество оборудованийĕ, тĕрлĕ материалсемпе приборсем ярса параççĕ.

Мускаври «Компрессор» завод тунă машинăсем аслă стройкăсенче ăнăçлă ĕçлеççĕ. Халĕ завод цехĕсенче Куйбышев гидроузелĕ валли хăватлă компрессорсем тăваççĕ. Кăçалхи пĕррелĕш кварталта çавăн пек машинăсем виççĕ туса пĕтереççĕ.

(ТАСС).

## Хĕллехи вăхăтра йывăç лартаççĕ

ЧКАЛОВ, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хула урамĕсенче йывăçсем лартма тытăннă. 50 çул хушшинче 10—12 метр çӳлĕш ӳснĕ чăрăшсене куçарса килсе лартаççĕ. Çавăн пек йывăçсене шăннă тăпрапа пĕрле чавса кăлараççĕ. 5—6 тонна таякан йывăçсене Бузулук вăрманĕнче кăларса, хăватлă самосвалсем çине тиесе, лартмалли вырăна илсе пыраççĕ. Нумай çул хушши ӳснĕ чăрăшсене Советсен çурчĕ патĕнчи площаде тата вокзал çывăхĕнчи площаде лартаççĕ.

## Çу промышленноçĕн çĕнĕ предприятийĕсем

НОВОСИБИРСК, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Барабинск çеçенхирĕнчи районсенче тата Новосибирск облаçĕн кăтаçĕрти районĕсенче çу промышленноçĕн çĕнĕ предприятийĕсене тăваççĕ.

Чулым районĕнче Серебрянски çу завочĕ ĕçлеме пуçланă. Барабинск районĕнче механизациленĕ икĕ çĕнĕ предприяти ĕçлет. Вĕсем — Кожевниковски çу завочĕ тата Барабинскинчи çу тата çăра сĕт туса хатĕрлекен завод. Черепановски районта та механизациленĕ çу завочĕ ĕçлеме пуçланă.

1952 çулта Новосибирск облаçĕнче çĕнĕрен çу завочĕсем 6 лартаççĕ.

## ВЛКСМ Центральнăй Комитетĕнче

### Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнчи рабочисемпе специалистсен пуçарăвĕ çинчен

Автозаводри çамрăк рабочисемпе конструкторсем тата технологсем кашни деталь тунă çĕрте, кашни ĕçре металл перекетлес тĕлĕшпе кĕрешӳ пуçарма сĕннĕ. Кузнечнăй цехри Кокошка, Иванов, Александров, Шукин ертсе пыракан бригадăсем тата технолог-комсомолецсем Елагин, Аполеонов, Кириллов юлташсем техникăллă çĕнĕ сĕнӳсене тата ытти паха ĕçсене пурнăçа кĕртсе кăçал 476 тонна металл перекетлеме пулнă. Кокошка юлташ ертсе пыракан бригада, сăмахран, тимĕр-тăмăр каяшĕнчен 50 тонна хурçă перекетлеме пулнă. Тĕп конструктор пайĕнчи—конструкторсемпе испытательсем Алексеев, Засорин, Панченко, Молотилов, Милягин, Дьяконов тата ытти юлташсем технологсемпе пĕрле ĕçлесе нумай ĕçсене конструкци тĕлĕшĕнчен лайăхлатма, çавпа май 1.700 тонна хура металл тата 90 тонна тĕслĕ металл перекетлеме пулнă.

Штампсен пайĕнче ĕçлекенсем Заговалов, Бескин, Щербаков, Попов, Гладков тата ытти юлташсем штампсемпе, кивелнĕ ĕç хатĕрĕсемпе тата инструментсемпе тĕрĕс усă курса çулталăкра 20 тонна легированнăй хурçă перекетлеме пулнă. Пресс цехĕнчи çамрăк новаторсем Буров, Бедров, Назаров тата Смирнов юлташсем нумай çĕнĕ сĕнӳсем пурнăçа кĕртме пулнă, çав сĕнӳсем çулталăк хушшинче 350 тонна металл перекетлеме май параççĕ.

Металл перекетлес тĕлĕшпе ăмăрту пуçаракансем комплекслă-творчествăллă бригадăсем тума сĕннĕ. Çав бригадăсене конструкторсемпе технологсене тата производственниксене кĕртнĕ. Вĕсем металл перекетлес тĕлĕшпе сĕнӳсем пама йышăннă, ĕç вырăнĕсенче металл перекетлени çинчен калакан счетсем çырса çапма пулнă.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ Сталин ячĕпе тăракан автозаводри çамрăк рабочисен, конструкторсемпе технологсен пуçарăвне ырланă тата комсомол организацийĕсене çак пуçарăва кашни предприятие сарма хушнă.

Ăмăрту пуçаракансене ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн Хисеплĕ грамотисемпе наградăланă. (ТАСС).

## Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

### А. С. Малышев юлташа Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Александр Степанович Малышев юлташа Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председатель заместителĕ Д. МИТЬКОВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1952 çулхи январĕн 10-мĕшĕ.

## Коллективлă договор

Республикăри промышленность предприятийĕсенче, сыхăну организацийĕсенче, суту-илӳ предприятийĕсемпе обществăллă апатлану предприятийĕсенче 1951 çулхи коллективлă договорсене пурнăçа кĕртнине массăллăн тĕрĕслес ĕç пуçланчĕ. Çакăнпа пĕрлех çĕнĕ, 1952 çулхи коллективлă договорсене тума хатĕрленес ĕç те сарăлса пырать.

Профсоюзсен X-мĕш съезчĕ коллективлă договорсем тăрăх икĕ енĕпе илнĕ обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртни пысăк вырăнта тăнине палăртрĕ.

Съезд решенийĕсене тата коллективлă договорсем тăрăх илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, пирĕн республикăри профсоюз организацийĕсем çулталăк планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарса яма пулăшрĕç. Рабочисемпе служащисем халĕ 90 процент ытла ăмăртса ĕçлеççĕ.

Лайăх продукци туса кăларассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, чĕртавар, материал, электроэнерги перекетлессишĕн, производствăна пур енĕпе те механизацилессишĕн тата автоматизацилессишĕн, техникăпа тата оборудованипе лайăхрах усă курассишĕн, малта пыракан участок, цех, предприятине илессишĕн пыракан ăмăрту анлăн сарăлчĕ.

Шупашкарти промышленность предприятийĕсенчен вунпилĕк предприяти: Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод, пир-авăр фабрики, кирпĕч завочĕ, Атăл леш енчи электростанци, макарон фабрики, торф предприятийĕ тата ытти те 1951 çулхи плана срокчен тултарчĕç. Куславккари çурт-йĕр тăвакан завод, Çĕмĕрлери «Большевик», Канашри аш-какай комбиначĕ, Йĕпреç, Вăрнар вăрманпромхозĕсем тата ытти нумай предприятисем çулталăк планне срокчен малтан тултарчĕç.

Коллективлă договорсем рабочисен ĕç условийĕсене малалла лайăхлатма май пачĕç. Нумай предприятисенче çĕнĕ вентиляци установкисем лартнă, санитари пӳлĕмĕсем тунă, ĕçре ăнсăртран аманассине тата чирлессине чакарас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса ирттернĕ.

Анчах коллективлă договорсем тăрăх илнĕ обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерствин, Апат-çимĕç промышленность министерствин, «Чăвашвăрман» тресчĕн чылай предприятийĕсем 1951 çулта государство планне тултараймарĕç. Кая юлса пыни пуринчен ытла организаципе техникăллă ĕçсен планне çителĕклĕ тултарса пыманнинчен, резервсемпе начар усă куриннчен, производствăри культура çителĕксĕр пулнинчен килет.

Ивановăри кирпĕч заводĕнчи, Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинчи профсоюз организацийĕсем коллективлă договор тăрăх илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн начар кĕрешеççĕ. Ку предприятисенче рабочисен ĕçне организацилес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур, йывăр ĕçсене сахал механизациленĕ. Ивановăри кирпĕч заводĕнчи тата Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинчи профсоюз организацийĕсем социализмлă ăмăртăва çиелтен ертсе пыраççĕ, производствăри лайăх ĕç методĕсене сарас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, рационализаторсемпе изобретательсене ертсе пымаççĕ. Çак предприятисем 1951 çулта производство планне тултараймарĕç, государство умĕнче пысăк парăма кĕчĕç.

Коллективлă договорсене тĕрĕслес ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинче, Вăрнар заводĕнче, «Чăвашвăрман» тресчĕн чылай предприятийĕсенче, машина-трактор станцийĕсенче чылайăшĕнче 1951 çулта коллективлă договорсене пурнăçа кĕртнине пĕрер хут кăна массăллăн тĕрĕсленĕ. Коллективлă договорсене пурнăçа кĕртнине кашни кварталтах массăллăн тĕрĕслесе тăмалла.

ВЦСПС президиумĕн решенийĕ тăрăх, коллективлă договорсене пурнăçа кĕртнине пĕтĕмĕшпе тĕрĕслес ĕçе 1952 çулхи январĕн 20-мĕшĕччен туса ирттермелле. ВЦСПС президиумĕ хуçалăхпа профсоюз организацийĕсене 1952 çулхи коллективлă договорсене промышленность, транспорт, строительство, вăрман хуçалăх предприятийĕсенче, сыхăну предприятийĕсемпе организацийĕсенче, государство суту-илĕвĕпе обществăллă апатлану предприятийĕсенче—январьте, машина-трактор станцийĕсенче—январь тата февраль уйăхĕсенче, торф предприятийĕсенче—апрельте тума хушрĕ.

1952 çулхи коллективлă договорсене государство планне кашни участок, цех, предприяти тăрăх тултарма тата ирттерсе тултарма май паракан конкретнăй обязательствăсем кĕртес пулать. Хуçалăхпа профсоюз организацийĕсен коллективлă договорсене кĕртекен обязательствисем çак ĕçсене тума май памалла: продукци туса кăлармалли государство планне кăтартнă стандартпа ассортимент тăрăх тултарса пырса, пысăк пахалăхлă продукци туса кăлармалла, брак тăвассине тата производствăри тăкаксене чакармалла, сортсăр продукци туса кăлармалла мар; продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелле, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли заданисене тултармалла, чĕртаварсене, материалă, топливăна, электроэнергие, ĕçукçи фондне перекетлемелле; ĕçпе производствăна организацилессине лайăхлатмалла; йывăр ĕçсене механизацилемелле; коммунизмăн аслă стройкисем валли заказсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа тумалла; çуртсене строительство ĕçĕн пахалăхне ӳстерсе строительство хакне йӳнетсе пымалла.

Социализмлă ăмăртăва малалла вăйлатса пырасси, бригадăсене, участоксене, цехсене тата предприятисене пĕтĕмĕшпе стахановла ĕçлеме майсем туса парасси—коллективлă договорсенче паллă вырăнта тăмалла.

Профсоюз организацийĕсен 1952 çулхи коллективлă договорсене пионер лагерĕсен, ача сачĕсен, яслисен хисепне ӳстерес, вĕсене юсас тата лайăхлатас тĕлĕшпе администраци илекен обязательствăсене кĕртмелле. Çавнашкалах культура учрежденийĕсен материальнăй никĕсне çирĕплетес енĕпе: çĕнĕ учрежденисем тăвас, хальхи клубсене, хĕрлĕ кĕтессене, библиотекăсене, спорт сооруженийĕсене юсас тата лайăхлатас тĕлĕшпе те администраци обязательствисене кĕртес пулать.

Профсоюз организацийĕсен рабочисемпе служащисем хушшинче культурăпа воспитани ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе конкретнăй обязательствăсем илмелле.

1952 çулхи коллективлă договорсенче предприяти коллективĕ умĕнче тăракан задачăсем тулли палăрса тăмалла.

Коллективлă договор вăл—хуçалăхпа профсоюз организацийĕсем илнĕ обязательство, ăна хуçалăх руководителĕсен те, рабочисемпе служащисен те пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пымалла.

Ф. РОМАНОВ,
Чăвашоблпрофсовет председателĕ.

# Ленинизм идейисем халăхсен коммунизм патне çитмелли çулне çутатса тăраççĕ

Большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă гениллĕ çулпуç, мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисен çулпуçĕпе учителĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитет. ССР Союзĕнчи коммунизм строительствинче тунă аслă çитĕнӳсем, пĕтĕм тĕнчере революциллĕ юхăм ӳссе пыни ленинизм идейисен никам çĕнтерейми хăватлă вăйне уççăн кăтартса тăраççĕ. Совет халăхĕ, Ленин кăтартса панă çулпа шанчăклăн пырса, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ çул кăтартса пынипе хамăр çĕршывра социализм турĕ, халĕ ĕнтĕ коммунизмлă обществăн çутă çуртне ăнăçлăн туса пырать.

Ленин—Сталин вĕрентĕвĕ ĕçсынни массисен тĕп интересĕсене тĕрĕс палăртса тăрать, çавăнпа вăл çĕнтерсе пырать. Ленинизм мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисене ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç тумалли çула кăтартса тăрать.

Ленинпа Сталинăн никам çĕнтерейми аслă партийĕ нумай çул хушши паттăр кĕрешсе тунă ĕçсенче ленинизм çĕнтерĕвĕсем палăрса тăраççĕ. Ленинпа Сталин большевиксен партине, çĕнĕ сăнарлă партие, ленинизм партине туса пăхса ӳстернĕ, вăл халăхпа уйрăлми çыхăнса тăрать тата халăх массисен хушшинчен вăй илсе ĕçлесе пырать. Ленин—Сталин партийĕ совет халăхне социализм тăвас ĕçре ертсе пынă вăрçă фрончĕсенче, çавăн пекех мирлĕ строительство фронтĕнче те аслă çĕнтерӳсем тума хавхалантарса тата организацилесе пычĕ. Большевиксен партийĕ, хăйĕн вăйне пĕтĕмпех ĕçсыннисен телейĕшĕн кĕрешес ĕçе парса, пĕтĕм тĕнчере рабочи класс партийĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăчĕ.

Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пыракан аслă Сталин Ленин ялавне çӳле тытса пырать, çавăнпа Ленин вĕрентĕвĕ çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пырать. Сталин юлташ Ленин вĕрентĕвне гениллĕ малалла аталантарчĕ, Ленин кăтартса панисене пурнăçлассишĕн кĕрешес ĕçре совет халăхне ертсе пычĕ. Сталин вăл—паянхи Ленин. Ленин вилнĕ хыççăн унăн ĕçне коммунизмăн ăсларан та аслă зодчийĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çулпуçĕ Сталин юлташ туса пырать,—ку вăл пĕтĕм этемлĕхшĕн пысăк телей.

* * *

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче тунă ĕçсен тĕп итогĕ ССР Союзĕнче социализм çĕнтерни пулать. Социализмлă общество туса хуни тата совет халăхĕ вăрçă хыççăнхи вăхăтра коммунизмшăн кĕрешсе тунă çĕнĕ çитĕнӳсем ленинизм чаплă çĕнтерӳ тунине уççăн кăтартса тăраççĕ.

Совет çĕршывĕ, империализмлă вăрçăпа граждан вăрçине пула чухăнланса тата вăйсăрланса юлнă çĕршыв. социализмлă экономика никĕсне хывма тытăннă вăхăтра вилĕме пула Ленин пирĕнтен уйрăлса кайнă.

1922 çулхи февраль вĕçĕнче çырнă «Публицист заметкисем» ятлă статьяра Ленин Совет çĕршывĕ умĕнче социализмлă экономика никĕсне хывас ĕçре пысăк задачăсем тăраççĕ тесе кăтартса панă, вăл, малаллине витĕр курса, пирĕн çĕршыв, капитализмлă çĕршывсемпе танлаштарсан, нумай пысăкрах хăвăртлăхпа малалла кайма пултарать, тесе кăтартса панă.

Ленин çапла çырнă: «...эпир, пирĕн çĕршыв юхăннă, чухăнланнă пулин те, вăл кая юлнă, ăна выçлăх аптăратать пулин те, экономикăна социализм патне çитме хатĕрлес енĕпе малалла кайса пыма тытăнтăмăр, çав вăхăтрах пирĕнпе юнашар, пĕтĕм тĕнчере, пирĕн çĕршывран маларах кайнă, пирĕнтен пин хут пуянрах тата çар хăвачĕ тĕлĕшпе пирĕнтен пин хут хăватлăрах çĕршывсем «хăйсен» капитализмлă экономики—хăйсем мухтаса ырлакан, тахçантанпах паллă, çĕршер çул хушшинче сăнаса пăхнă, капитализмлă экономика енĕпе çаплах каялла кайса пыраççĕ» (Соч., 33 т., 181 стр.).

Ку чухнехи вăйлă аталаннă индустрисĕр, малта пыракан машинăллă техникăсăр, электрификацисĕр социализм пулма пултараймасть, тесе вĕрентнĕ Ленин. Коммунизм вăл—Совет влаçĕ пур чухне пĕтĕм çĕршыва электрификацилени пулать,—çапла каласа хăварнă Ленин. Совет халăхĕ, Ленин кăтартса панă çулпа шанчăклăн пырса, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ çул кăтартса пынипе хамăр çĕршыва индустриализацилемелли тата ялхуçалăхне коллективизацилемелли ленинла-сталинла плана ăнăçлăн пурнăçларĕ. 1940 çул тĕлнех, пирĕн çĕршывшăн пысăк испытани пуçланас умĕн, империалистсем каллех пирĕн çĕршыв çине тапăнас умĕн, Ленинпа Сталин туса хунă Совет государстви индустриллĕ-колхозлă хăватлă держава пулса тăчĕ. Кивĕ Российăн 1913 çулта пулнă шайне, материальнăй никĕсне Совет Союзĕн 1940 çулхи, тĕнчери иккĕмĕш вăрçă умĕнхи, материальнăй вăйĕпе танлаштарса пăхса, Сталин юлташ ССР Союзĕ çав вăхăт тĕлне патша Российĕнчен чугун шăратса кăларас тĕлĕшпе 4 хут, хурçă шăратас тĕлĕшпе—4,5 хут, çĕр кăмрăкĕ кăларас тĕлĕшпе—5,5 хут, нефть кăларас тĕлĕшпе—3,5 хут, таварлă тĕштырă тăвас тĕлĕшпе—17 миллион тонна чухлĕ, чĕрĕ çĕр мамăкĕ тăвас тĕлĕшпе—3,5 хут мала иртнине кăтартса пачĕ.

«Ку вăл,—тесе кăтартса пачĕ Сталин юлташ,—малалла сикни пулчĕ, çав сикĕме тунипе пирĕн Тăван çĕршыв кая юлнă çĕршывран малта пыракан çĕршыв, аграрлă çĕршывран индустриллĕ çĕршыв пулса тăчĕ.

Çĕршыва вăйлатса çĕнетес çав историллĕ ĕçе, 1928 çултан—пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕнчен пуçласа, виçĕ пилĕкçуллăх хушшинче туса ирттернĕ. Пирĕн унччен вăхăтра тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пирки тата граждан вăрçи пирки арканса юлнă промышленноçа юсамалла тата çав вăрçăсен суранĕсене тӳрлетмелле пулчĕ. Пĕрремĕш пилĕк çуллăх плана 4 çулта тултарнине, вăрçă пирки виççĕмĕш пилĕк çуллăх плана пурнăçлас ĕç тăваттăмĕш çулĕнче чарăннине шута илсен, хамăрăн çĕршыва аграрлă çĕршывран индустриллĕ çĕршыв туса хума мĕн пурĕ 13 çула яхăн кирлĕ пулни курăнать.

Çак питĕ пысăк ĕçе пурнăça кĕртме 13 çул хушши çав тери кĕске срок пулнине йышăнмасăр тăма çук» (Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче каланă сăмахран).

Совет влаçĕ туса хунă хыççăн малтанхи йывăр çулсенче В. И. Ленин малаллине гениллĕ курса калани пурнăçланчĕ. Совет çĕршывĕ пысăк хăвăртлăхпа малалла кайса пычĕ, çав вăхăтрах капитализмлă çĕршывсем каялла кайса пычĕç е, вĕсемшĕн чи лайăх пулнă чухне те, пĕр вырăнтах тăчĕç.

Социализм строительствинчи çак питĕ пысăк çитĕнӳсене большевиксен партийĕ ленинизм тăшманĕсене хирĕç, троцкистла-бухаринла тата буржуалла-националистла сутăнчăксене хирĕç, хăватлăн кĕрешсе пынипе турĕ. Сталин юлташ, ленинизм тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе, Ленин вĕрентĕвне сыхласа хăварчĕ, Ленин вĕрентĕвне пур енĕпе те аталантарса, совет халăхне ССР Союзĕнче социализм тăвас ĕçре ертсе пычĕ. Социализм историре палăрса тăракан питĕ пысăк çĕнтерӳсем тунине Сталинла Конституцире çырса хунă, Сталинла Конституцие йышăнни совет халăхĕ социализмран майĕпен коммунизма куçмалли çул çине тăнине пĕлтерчĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыв Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи йывăр тĕрĕслеве чыслăн тӳссе ирттерчĕ. ССР Союзĕ хăй пĕччен çапăçса, США-па Великобританири влаçра тăракан ушкăнсем, Совет государствине юн тăктарса хавшатма мĕнпур майсемпе тăрăшнăскерсем, чăрмантарса тата сутăнчăклă ĕçсем туса пынă пулин те, гитлерла захватчиксемпе Япони империалисчĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра совет халăхĕ, Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче пырса, тăшман ишĕлтерсе хăварнă хуçалăха хăвăрт юсаса çитерчĕ тата хуçалăхпа культура строительствин мĕнпур отраслĕсенче çĕнĕ чаплă çитĕнӳсем турĕ. 1951 çулта индустриллĕ производство шайĕ вăрçă умĕнхи 1940 çулхи шайран икĕ хут мала иртрĕ.

Хальхи вăхăтра Совет Союзĕ хурçă Англире, Францире, Бельгире тата Швецире шăратса кăларнă чухлех шăратса кăларать,—çав çĕршывсем хурçă шăратса кăларас тĕлĕшпе Европăра малта пыракан çĕршывсем шутланнă. 1951 çулта ССР Союзĕнче электроэнерги 104 миллиард киловатт-сехет туса кăларнă. Ку вăл Англипе Францире электроэнерги туса кăларнинчен ытларах пулать. Атăлпа Дон, Днепрпа Аму-Дарья çинче лартакан çĕнĕ гидроэлектростанцисем кашни çулталăкра Италире туса кăларакан электроэнерги чухлĕ электроэнерги парса тăма пуçлĕç. 1951 çулта ССР Союзĕнчи чугун çул транспорчĕ грузсем турттарни 11 процент ӳсрĕ. Çак ӳсĕм Англипе Францири чугун çулсем çинче çулталăк хушшинче грузсем турттарнипе танлашать.

Пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕ те, чи малта пыракан машинăллă техникăпа пуянланнă, наукăн чи çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе уçă куракан ялхуçалăхĕ чаплă çитĕнӳсем турĕ. Юлашки çулсенче пирĕн çĕршывра кашни çул тĕштырă пухса кĕртни 7 миллиард пăт ытла пулчĕ. Çĕр мамăкĕ—техникăллă паха культура. Хальхи вăхăтра пирĕн Совет çĕршывĕ çĕр мамăкĕ Индипе Пакистанра тата Египетра акса тунă чухлĕ пухса кĕртет,—вĕсем çĕр мамăкĕ акса тăвас тĕлĕшпе паллă çĕршывсем пулса тăраççĕ.

Халĕ ĕнтĕ Совет çĕршывĕн индустри производствин хăвачĕ питĕ пысăк, çавăнпа вăл калама çук пысăк задачăсене —çутçанталăка улăштарса çĕнетес, коммунизмăн аслă стройкисене тăвас, питĕ пысăк каналсемпе уй-хире шăвармалли системăсем тăвас ĕçе пурнăçлама пултарать.

Социализмлă общество пысăк хăвăртлăхпа малалла кайса пырать. Кун пек хăвăртлăх капитализмлă обществăра нихçан та пулман тата пулма та пултараймасть.

Совет халăхĕн пурнăçĕ пĕрмаях лайăхланса пырать. Пирĕн çĕршывра аслă ĕç—культурăллă революци туса ирттернĕ. Хальхи вăхăтра ССР Союзĕнчи аслă шкулсемпе техникумсенче 2 миллион та 720 пин çын вĕренет. Наука, литературăпа искусство чечекленсе ӳссе пыни ССР Союзĕнче культура пĕрмаях малалла кайса пынине кăтартса тăрать.

В. И. Ленин çапла çырнă: «...эпир çакăнпа мухтанса савăнма пултаратпăр тата мухтанса савăнатпăр: эпир социализмлă государство тăвас ĕçе пуçласа яма телейлĕ пултăмăр, çапла эпир пĕтĕм тĕнче историйĕнче çĕнĕ эпоха пуçласа ятăмăр, ку вăл—çĕнĕ класс пуç пулса тăмалли эпоха, ку класс капитализмлă мĕнпур çĕршывсенче пусмăр тӳссе пурăнать тата çĕнĕ пурнăç патне, буржуазие çĕнтересси патне, пролетариат диктатури патне, этемлĕхе капитал пусмăрĕнчен, империализмлă вăрçăсенчен хăтарасси патне малалла кайса пырать» (Соч., 33 т., 32—33 стр.).

Совет çыннисем хамăр Тăван çĕршывшăн тивĕçлипе савăнса хăйсен ĕçĕсен итогĕсене тăваççĕ.

* * *

Ленинизмăн ĕмĕр-ĕмĕр чĕрĕ пулакан, творчествăллă теорийĕ, Ленинпа Сталинăн аслă вĕрентĕвĕ—коммунизмшăн кĕрешес ĕçре совет халăхĕ аллинчи хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра большевиксен партийĕ идеологиллĕ ĕçе çӳлĕ пусăма хăпартрĕ. Парти ертсе пынипе философи ыйтăвĕсемпе, биологи ыйтăвĕсемпе, чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсемпе творчествăллă дискуссисем ирттернĕ, çак творчествăллă дискуссисем совет наукине малалла аталанса пыма пысăк пулăшу пачĕç. Партин Центральнăй Комитечĕ литературăпа искусство ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă постановленисем социализмлă культурăна малалла чечеклентерсе ӳстерме май пачĕç.

Сталин юлташ чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсемпе çырнă гениллĕ ĕçсем общество çинчен вĕрентекен наукăна малалла аталантарма пысăк пулăшу пачĕç. Сталин юлташăн çак çĕнĕ ĕçĕ совет наукин мĕнпур отраслĕсене догматизма хирĕç, пĕр вырăнта тăнине тата хытса кивелнине хирĕç кĕрешме хăватлă хĕçпăшал пачĕ. Ленинизм вăл—вырăс культурин тата пĕтĕм этемлĕх культурин чи çӳлĕ çитĕнĕвĕ пулса тăрать. Марксистла-ленинла теорие тĕплĕ вĕренесси—кашни коммунистăн тивĕçĕпе обязанноçĕ.

«Специалист-мелик çав вăхăтрах физикăпа е ботаникăпа специалист пулни тата тепĕр майлă та пулни кирлех те мар,—тесе вĕрентет Сталин юлташ.—Анчах та наукăн пĕр отраслĕ пур, çак отраслĕне пĕлни наукăн пур отраслĕсенчи большевиксемшĕн те обязательно пулма тивĕç,—çакă вăл, марксистла-ленинла наука, общество çинчен, общество аталанса пыни çинчен, пролетариллĕ революци аталанăвĕн законĕсем çинчен, коммунизм çĕнтерĕвĕ çинчен вĕрентекен наука» («Ленинизм ыйтăвĕсем», 11 издани, 598 стр.).

Совет халăхĕн пурнăçĕнче коммунизм паллисем ытларах та ытларах куçа курăнса пыраççĕ. Анчах çынсен ăс-тăнĕнче капитализм юлашкисем çаплах тытăнса тăраççĕ-ха. Çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене çĕнтермесĕр коммунизм тума май çук, ăнăçлăн малалла кайма май çук.

Ĕçсыннисене коммунистла воспитани парасси—парти организацийĕсен пысăк задачи. Парти совет çыннисене ĕç çине коммунистла пăхма, государство интересĕсем çине, социализмлă харпăрлăх çине коммунистла пăхма вĕрентсе воспитани парать. Çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкийĕсене хирĕç, буржуази идеологийĕн палăрăмĕсене хирĕç, буржуаллă национализмпа космополитизма хирĕç хăватлăн кĕрешсе, большевиксен партийĕ ĕçсыннисене пролетариллĕ интернационализм майлă пулма, совет патриочĕсем пулма вĕрентсе воспитани парать. Совет патриотизмĕ ĕçсыннисен интернационаллă тăванлăх идейипе тачă çыхăнса тăрать. Расăсемпе нацисем пĕр тан пулмалли çинчен, халăхсен туслăхĕ çинчен вĕрентекен ленинла-сталинла идеологи совет çыннисене тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусене тĕрĕс ăнланма пулăшать, ССР Союзĕнчи халăхсене коммунизм строителĕсен тăванла пĕр çемйине пĕтĕçтерет.

Ленин—Сталин партийĕ ĕçсыннисене хăйсене тата хăйсен ĕçне критикăласа пăхма вĕрентет. Сталин юлташ вĕрентнĕ тăрăх, критикăпа самокритика пирĕн аталану законĕ пулса тăрать, критикăпа самокритика мĕнпур пăнтăхса, хытса ларнине, мĕнпур киввине, вилсе пыраканнине, пире çĕнтерӳллĕн малалла кайма чăрмантараканнине çĕнтермелли тĕп хатĕр пулса тăрать, массăсен ăнланулăхĕн шайĕнчен, кадрсене идейăпа теори енчен вĕрентсе хатĕрленинчен, большевикла критикăпа самокритика витĕмлĕхĕ нумай килет.

Пирĕн ертсе пыракан кадрсем, совет интеллигенцийĕ марксистла-ленинла теорие вĕренсе алла илни—пĕтĕм идеологиллĕ ĕçе малалла вăйлатса пымалли, массăсене коммунистла воспитани парас ĕçе малалла вăйлатса пымалли çул. Ленинизм—пирĕн кĕрешӳ ялавĕ, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешмелли хăватлă хĕçпăшал.

* * *

Ленин Совет государствин тулашри политикин улшăнман тĕп çул-йĕрне кăтартса панă. Ку çул-йĕр—миршĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешесси. Социализмлă государствăшăн ытти çĕршывсене тытса илни кирлĕ мар. Вăл капитализмлă государствăсемпе экономика енĕпе килĕштерсе ĕçлемелли политика тытса пырать.

Совет Союзĕ, мирлĕ политика тытса пырса, çавăнпа пĕрлех яланах вăрçă хăрушлăхĕ пуррине, империализм пур чухне вăрçă хăрушлăхĕ пĕтменнине шута илмесĕр тăма пултараймасть. Ленинпа Сталин совет халăхне яланах сыхă пулма, Совет çĕршывĕ çине агрессорсем тапăнма хăтланнине хирĕç отпор пама яланах хатĕр пулма вĕрентеççĕ.

США-па Англири влаçра тăракан ушкăнсем ертсе пыракан империалистла лагерь Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç вăрçăпа тапăнма васкасах хатĕрленет. Империалистсем ССР Союзне килĕшӳсем тăвассинчен пăрăнаççĕ, вĕсем икĕ система хирĕçмесĕр пурăнмалли йĕркене сирсе пăрахаççĕ. Мĕнпур çĕршывсене Американа пăхăнтарас тесе, США-ри влаçра тăракан ушкăнсем тĕнчери виççĕмĕш вăрçă пуçласа яма хатĕрленеççĕ.

Ленин кăтартса панă çулпа шанчăклăн пыракан Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери мирĕн хăватлă тĕрекĕ пулса тăчĕ. Совет государстви, США-па Англири влаçра тăракан ушкăнсем провокациллĕ политика тытса пыраççĕ пулин те, пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвассишĕн, хĕçпăшалсене чакарассишĕн тата атомлă хĕçпăшала чарса лартассишĕн, мĕнпур çĕршывсем хушшинче экономикăпа культурăллă йĕркеллĕ çыхăнусем туса хурассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешет. Пирĕн çĕршыв тавра, унăн ленинла-сталинла тулашри политикине ырласа, мĕнпур çĕршывсенчи тӳрĕ кăмăллă çĕршер миллион простой çынсем пĕтĕçрĕç, вĕсем государствăсем хушшинче мир тăвассишĕн тата килĕштерсе ĕçлемелле тăвассишĕн тăраççĕ. Пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвассишĕн кĕрешмелли кампани пуçланнăранпа 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Мир Пакчĕ тума чĕнсе калани çине 596 миллион çын алă пуснă.

Совет халăхĕ, мирлĕ ĕçре пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçлесе, хамăрăн çĕршыва тăшмансенчен сыхлама кирлĕ мĕнпур хатĕрсем пулмаллине те манмасть.

«Паллах, агрессорсем Совет Союзĕ çине тапăнсан, вăл хĕçпăшалсăр юлассине кĕтеççĕ,—тесе каларĕ И. В. Сталин юлташ атомлă хĕçпăшал çинчен «Правда» корреспонденчĕ панă ответра.—Анчах Совет Союзĕ çавăнпа килĕшмест, вăл агрессорсене вăйлă хĕçпăшалпа кĕтсе илме кирлĕ тесе шутлать».

Америка правительстви юлашки вăхăтра пире хирĕç тăшманла ĕçсем туни, вăл Совет çĕршывне шпионсемпе диверсантсем яни, ССР Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрла ĕçсем тума 100 миллион доллар укçа уйăрса парасси çинчен ятарласа «закон» йышăнни—çаксем пурте кашни совет гражданинĕн сыхăлăха çӳлте тытмалли çинчен калаççĕ.

Империалистсем ССР Союзне хирĕç вăрçăллă поход туса çĕнтерме шутлани пĕтĕмпех путланса ларать. Ун пек вăрçă капитализм системи хăй ишĕлсе аннипе çеç вĕçленме пултарать, мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра миршĕн, социализмшăн тата демократишĕн тăракан лагерь империализм лагерĕнчен, шалти хирĕçӳсем пирки хавшаса пыракан империализмпа агрессиллĕ вăрçăсен лагерĕнчен, нумай вăйлăрах.

Мирпе демократишĕн кĕрешме пĕрлешнĕ аслă лагере хăватлă Совет Союзĕ, пĕтĕм тĕнчери миршĕн яланах çине тăрса кĕрешекен çĕршыв, ертсе пырать. Мир ялавне çӳлте тытса пыракан аслă Сталин юлташ халăхсене Америкăри вăрçă чĕртекенсене хирĕç кĕрешме хавхалантарса пырать, простой çынсене тĕнчери прогресс, мир тата демократи вăйĕсем реакципе вăрçăн хура вăйĕсене пурпĕрех çĕнтерессине шанса тăма çирĕп хăват парать.

Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послание мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем чунтан-чĕререн ырларĕç. Çак послани Япони халăхне, Америка оккупанчĕсем чухăнлатса çитернĕ тата юхăнтарнă халăха çĕклентерчĕ. Çак послани Совет государстви миршĕн тăнине, вăл ытти халăхсем ирĕклĕ те телейлĕ пулччăр тесе чунтан тăрăшнине пысăк хăватпа кăтартса пачĕ.

Çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур вырăнсенчи ытларах та ытларах çынсем ленинизмăн хăватлă идейисене йышăнса пыраççĕ. Ленинизм идейисем капитализмлă çĕршывсенчи рабочи класа капитализм пусмăрĕнчен хăтăлассишĕн кĕрешме хавхалантараççĕ. Ленинизм колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи ĕçсыннисене пусмăртан хăтăлма шанчăк парса тăрать, ĕçсыннисем Америкăпа Англири империалистсене хирĕç—халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмасăр пурăнассин усал тăшманĕсене хирĕç—кĕрешессине вăйлатсах пыраççĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем, Ленин—Сталин кăтартса панă çулпа пырса, социализм ăнăçлăн тăваççĕ. Ленинизм идейисем аслă Китай халăхне çĕнĕ пурнăç никĕсĕсене тăвас ĕçре хавхалантарса пыраççĕ. Нихçан иксĕлми çăлкуçĕ пек пулса тăракан ленинизм Корейăри паттăр халăха вăй-хăват парса тăрать. Вăл халăх Америка агрессорĕсене хирĕç хăюллă та паттăр кĕрешет. Ленинизм идейисем, çутă маяк пулса, пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн малашнехи ырă пурнăç патне çитмелли çула, çирĕп мир, ирĕклĕх тата халăхсен пĕртанлăхĕ патне çитмелли çула демократипе социализм çĕнтермелли çула çутатса тăраççĕ.

* * *

Эпир ленинизм çулĕпе шанчăклăн пынипе çĕнтерӳсем туса пынă тата малашне те çĕнтерсе пырăпăр. Эпир пурăнакан вăхăтра Ленинпа Сталинăн аслă вĕрентĕвне вĕренсе алла илесси кашни çыншăн, чи кирлĕ ĕç пулса тăрать. Коммунизм строителĕсен ăрăвĕ телейлĕ ăру, мĕншĕн тесен ун валли Ленинпа Сталинăн хăватлă вĕрентĕвĕ пур.

Ленин хăйĕн пĕтĕм пурнăçне халăхшăн панă, вăл пĕтĕм ĕçе халăхшăн туса пынă. Ленинăн нихçан манмалла мар сăн-сăнатне миллионшар çынсем яланах чĕрере тытаççĕ. Ленин ĕçне большевиксен аслă партийĕ малалла туса пырать. Ленин ялавне унăн соратникĕ тата тусĕ, унăн аслă ĕçне малалла туса пыракан Сталин юлташ çӳлте тытса пырать.

Ленин ялавĕпе, Сталин юлташ çул кăтартса пынипе, совет халăхĕ коммунизмăн чаплă çĕнтерĕвĕ патне шанчăклăн малалла утать.

**Б. ЛЕОНТЬЕВ.**

## В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ май докладсемпе лекцисем тата калаçусем ирттермелли ТЕМĂСЕМ

1. В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем.
2. Ленин—большевиксен аслă партине тăвакан тата унăн çулпуçĕ.
3. Ленин—тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствăна тăвакан тата унăн руководителĕ.
4. Ленин—наукăн аслă корифейĕ.
5. Ленинпа Сталинăн аслă туслăхĕ.
6. 28 çул Ленинсĕр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе.
7. Ленинизм—ĕçсыннисене коммунистла воспитани памалли никĕс.
8. Совет Союзĕнчи халăхсен çирĕп туслăхĕ — ленинизм идейисем пурнăçланни.
9. Ленин—Сталин партийĕ — совет халăхне коммунизмлă общество тăвас ĕçре çул кăтартса ертсе пыракан вăй.
10. Ленинпа Сталин Америкăри вăрçă хурахла, тискер империализм çинчен.
11. Ленинпа Сталин тĕрĕслĕхлĕ вăрçăсемпе тĕрĕслĕхлĕ мар вăрçăсем çинчен тата социализмлă Тăван çĕршыва сыхласси çинчен вĕрентни.
12. Ленинизм—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешмелли ялавĕ.

*ВКП(б) обкомĕн пропагандăпа* **АГИТАЦИ ПАЙĔ.**

## Пионер организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн

### Ишлей районĕнчи учительсен январьти канашлăвĕнчен

Ишлей районĕнчи учительсен январьти канашлăвĕ пионер организацийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе шкулсемпе учительсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе яврĕ.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçласа, учительсемпе директорсем тата шкулсенчи комсомол организацийĕсем пионер отрячĕсемпе дружинисене ертсе пырас ĕç чылай вăйланнă.

Ишекри вăтам шкулти учитель С. Ухтиаров юлташ класс руководителĕсем пионер отрячĕсемпе мĕнле тачă çыхăнса ĕçлени çинчен каларĕ.

— Мана, класс руководительне,—терĕ вăл,—пионер отрячĕ ĕçре питĕ пысăк пулăшу парать. Эпир звено сборĕсемпе отряд совечĕн ларăвĕсенче вĕренекенсен пĕлĕвне ӳстерес тата пионерсемпе шкул ачисен дисциплинине çирĕплетес ыйтусене час-часах сӳтсе яватпăр.

Пионерсемпе шкул ачисене политикăллă воспитани парас ĕçе Анат-Кĕнерти çичĕ çул вĕренмелли шкулта та лайăх йĕркеленĕ. Кунта пирĕн аслă çулпуçăмăрсем çинчен, ĕçсыннисен революциллĕ кĕрешĕвĕнчи паллă кунсем çинчен час-часах ятарласа пионер сборĕсем ирттереççĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, районти нумай шкулсенче вĕренекенсене çирĕп те анлă пĕлӳ парас ĕçре пионер организацийĕсен вăйĕпе кирлĕ таран усă кураймаççĕ-ха. Учительсем çителĕксĕр пулăшса тата ертсе пынине пула чылай çĕрте пионер дружинисем хăйсен ĕçĕсене кирлĕ пек йĕркелеймеççĕ.

Тăрăнри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренӳ ĕçне лайăхлатассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Пĕрремĕш çур çулта кунта 179 пионертан 27 ача вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман. Çак çитменлĕх вăл пуринчен ытларах вĕренӳре юлса пыракансене пулăшас тĕлĕшпе отрядсемпе дружинăсем тĕрĕс мар ĕçленинчен килнĕ. Дружинăсемпе отрядсен сборĕсене учительсем хутшăнмаççĕ. Дружинăсем хăшпĕр вĕренекенсем мĕнле сăлтавпа кая юлса пынине тĕпчесе пĕлмеççĕ.

Хăшпĕр шкул руководителĕсем пионер организацийĕсен ĕçне нимĕн вырăнне те хумаççĕ. Сăмахран, Етĕрнекассинчи çичĕ çул вĕренмели шкулта (директорĕ Горшков юлташ) педагогика советĕнче ку таранччен те ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕн итогĕсене сӳтсе явман. Учительсем пленум решенийĕсем çинчен пĕлмеççĕ. Чантăрти пуçламăш шкул заведующийĕ Тарасова юлташ вара пионер организацийĕн ĕçĕпе пачах та интересленмест.

Канашлура пулнисем чылай шкулсенче çамрăксен пултарулăхне ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Районти шкулсенче çамрăксене физически воспитани парас ĕç çителĕксĕр пырать. Пĕр шкулта та типовăй спорт площадки çук. Дружинăсенче спорт ăмăртăвĕсем сайра хутра кăна пулаççĕ, БГТО значокĕн нормине парас ĕçе пĕр шкулта та тивĕçлипе йĕркелемен.

Çамрăк натуралистсен пултарулăхне ӳстерес тĕлĕшпе хăшпĕр шкулсем паха опыт туянчĕç. Уйрăмах Çĕнял-Покровскинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ К. Верендеев юлташ ертсе пыракан натуралистсен кружокĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Анчах нумай шкулсенче çак кирлĕ ĕçе паянхи куна та тивĕçлипе хакламаççĕ.

Тухса калакан юлташсем пионерсен çуллахи канăвне йĕркелес, пионер сборĕсене ирттерес ĕçри çитменлĕхсене сивлерĕç, ВЛКСМ райкомĕпе çутĕç пайĕнчи работниксем ĕçре çаврăнăçусăр та пуçарусăр пулнине критикăларĕç. Нумай учительсем пионер ĕçне тĕплĕ пĕлмеççĕ. Çапла пулин те шкулсенчи методика пĕрлешĕвĕсенче пионер организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалли майсем çинчен сӳтсе явмаççĕ. Районти çутĕç пайĕ çумĕнчи советра та ку ыйтăва пачах тапратмаççĕ.

ВЛКСМ райкомĕпе çутĕç пайĕ пионер вожатăйĕсене тупса лартас тата вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Аслă пионер вожатăйĕсем хушшинче педагогикăллă пĕлӳ илни пĕр çын та çук. 33 вожатăйран семинарсенче 10—15 çын кăна пулать. Отряд вожатăйĕсемпе пионерсен активĕ валли нимĕнле канашлусемпе семинарсем те ирттермен. Актива воспитани парас тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ те, шкул руководителĕсемпе пуçламăш комсомол организацийĕсем те нимĕн те туман.

ВЛКСМ райкомĕпе çутĕç пайĕн работникĕсем шкулсенче пулсан пионер организацийĕсен ĕçĕпе интересленмеççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмаççĕ.

Канашлу Чăваш АССР Çутĕç министерствипе ВЛКСМ обкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕ. ВЛКСМ обкомĕпе Чăваш АССР Çутĕç министерстви лайăх ĕçлекен пионер организацийĕсен ĕçне тĕпчесе вĕренес, лайăх опыта ытти çĕре çитерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

**Н. ЕГОРОВ.**

## Хире—вырăнти удобренисем

СОВЕТСКИ. Тырпул тухăçлăхне ӳстерес ĕçре малта пыракан колхозсем вырăнти удобренисемпе анлă усă курма тăрăшаççĕ. Хĕле кĕнĕренпе «Самолет» колхоз хире 6.500 лав тислĕк кăларса купаларĕ. Хире çавăн пекех Ленин ячĕпе тăракан колхоз 2.800 лав, Маленков ячĕпе тăракан колхоз 4.900 лав тислĕк кăларнă.

Кăçал колхозсем торфпа ытларах усă курма тытăнаççĕ. «Самолет», «Восход», Степан Разин ячĕпе, Жданов ячĕпе, Суворов ячĕпе тăракан колхозсем суртрисем акмалли уя торф кăлараççĕ.

## Редакцие килнĕ çыру

### Буфета мĕншĕн хупрĕç?

Иртнĕ кĕркунне пирĕн чăлха фабрикинче буфет уçăлчĕ. Рабочисемпе работницăсем тата служащисем куншăн питех те савăннăччĕ. Кăнтăр канăвĕ вăхăтĕнче вĕсем буфетран булка е ытти çимĕç илсе çиетчĕç, вĕри чей ĕçетчĕç. Çанталăк сивĕтме пуçласан фабрика дирекцийĕ буфет валли ятарласа ăшă пӳлĕм уйăрчĕ. Культурăллă суту-илӳ тума услови çителĕклĕччĕ. Анчах пĕр уйăх ытларах ĕçленĕ хыççăн столовăйсемпе ресторансен тресчĕ (директорĕ Кузьмин юлташ) буфета хупса хучĕ.

Пирĕн фабрикăра 500 çынна яхăн ĕçлет. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче, 20 минут хушшинче, эпир булка та пулин илсе çиейместпĕр, мĕншĕн тесен фабрика çывăхĕнче урăх ниçта та столовăй та, буфет та çук.

Фабрикăра буфет ĕçлеме услови çителĕклĕ. Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕн суту-илӳ пайĕнчен эпир пире çак ĕçре пулăшма, çитес кунсенчех Шупашкарти чăлха фабрикинче буфет уçмалла тума ыйтатпăр.

**А. БАБИЧ,**
фабрикăри смена начальникĕ,
**У. ГУРЬЕВА,**
**А. КУРЯБИНА,**
кетлирна-стахановкăсем.

## „Чăваш Коммуни“ хаçатра çырнă хыççăн

### „Представительсен ĕçне тĕрĕслемелле“

1951 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра Е. Федотов çырнă «Представительсен ĕçне тĕрĕслемелле» ятлă çыру пичетленсе тухрĕ. Статьяра ВКП(б) Етĕрне райкомĕпе райисполкомĕн представителĕсем колхозниксене вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарма çителĕксĕр пулăшнине кăтартса панăччĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн исполкомĕ «Представительсен ĕçне тĕрĕслемелле» ятлă корреспонденцире асăннă фактсем тĕрĕс пулни, вăрман хатĕрлевне ертсе пырассине лайăхлатни çинчен пĕлтерчĕ.

# Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхоз опытне—пур колхозсене те

ВӐРНАР. Январӗн 5-мӗшӗнче Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхозра Вӑрнар, Канаш, Йӗпреҫ районӗсенчи колхоз председателӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Унта ҫавӑн пекех асӑннӑ районсенчи ВКП(б) райком секретарӗсемпе райсовет исполком председателӗсем, ялхуҫалӑх пайӗсен заведующийӗсем тата Вӑрнарти ялхуҫалӑх шкулӗ ҫумӗнче уҫӑлнӑ пӗр уйӑхлӑх курсра вӗренекен 6 районти (Вӑрнар, Шӑхасан, Ҫӗмӗрле, Калинино, Хӗрлӗ Чутай тата Элӗк районӗсенчи) колхоз председателӗсем пулчӗҫ. Канашлура пурӗ 100 ҫын ытла пулчӗ.

Канашлура пулнисем малтан Сталин ячӗпе тӑракан колхоз хуҫалӑхӗпе паллашрӗҫ. Унтан канашлура Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ, Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ, СССР Верховнӑй Совет депутачӗ С. К. Коротков юлташ доклад туса пачӗ. Коротков юлташ хӑйсен ӗҫ опычӗпе тӗплӗн паллаштарчӗ тата 1952 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе колхозсем умӗнче тӑракан пайнхи задачӑсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Доклад хыҫҫӑн канашлура пулнисем нумай ыйтусем парса ыйтса пӗлчӗҫ. Вӗсем малашне Сталин ячӗпе тӑракан колхоз опытне хӑйсен колхозӗсенче сарма, вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн ҫине тӑрса кӗрешме сӑмах пачӗҫ.

Канашлу ӗҫне ВКП(б) обкомӗн секретарӗ Н. А. Шмаков, Чӑваш АССР Ялхуҫалӑх министрӗ Г. А. Мартынов юлташсем хутшӑнчӗҫ.

## Хӑнасен экскурсийӗ

Январӗ ирӗ. Кӑвак сутӑпах Кольцовкӑна хӑнасем килме пуҫларӗҫ. Кӳршӗ районсенчи колхозсен председателӗсем канашлӑва килеҫҫӗ. Канашлӑва ҫеҫ мар, чапа тухнӑ вӑйлӑ тырпул мастерӗсен опытне вӗренме килеҫҫӗ.

Ял патне умлӑ-хыҫлӑ лавсем сывхараҫҫӗ. Вӗсене хирӗҫ ялтан та вӗҫӗ-хӗррисӗр лавсем тухаҫҫӗ, ҫынсем хирелле утаҫҫӗ.

Вӗҫӗ-хӗррисӗр пыракан лавсем хире тислӗк турттараҫҫӗ, ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пыракан ҫынсем, сенӗксемпе кӗреҫесем йӑтнӑ та, хирти пысӑк тислӗк куписене юсаса штабельсем тума каяҫҫӗ. Тислӗкпе пӗрлех кунта хире минераллӑ удобренисем кӑларса вӗсене ҫуркунне апат памалли лаптӑксем ҫине уйрӑм ещӗксемпе вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл ҫуркунне калчасене апат парас ӗҫе хӑвӑрт туса иртерме май парать. Тепӗр енчен ку ӗҫ валли ун чухне туртӑм вӑйӗ пачах кирлӗ мар пулать.

Хӑнана пыракансем яла ҫитсе кӗриччен ҫакна ӑнланаҫҫӗ: кунта ялхуҫалӑх ӗҫӗ—вӑхӑтлӑх ӗҫ мар. Вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе хӗлле те ҫуллахи хӗрӳллӗ вӑхӑтри пекех ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Пур ҫӗрте те ӗҫ вӗресе тӑрать.

*Хӑнасем пуҫтарӑнса ҫитсен,* Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхоз председателӗн заместителӗ Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ П. Пупин юлташ вӗсене колхоз хуҫалӑхӗ тӑрӑх экскурсире пулма сӗнет. Ҫакӑнпа хӑнасем пурте килӗшеҫҫӗ, ӑна хапӑл туса йышӑнаҫҫӗ. Экскурси пуҫланчӗ.

Хӑнасем выльӑх чӗрлӗх ферминче. Унта йӗркеренех стандартлӑ витесем лараҫҫӗ. Малтанах хӑнасем лаша витисенче пулчӗҫ. Акӑ, 100-шер пуҫ вырнаҫмалӑх тунӑ икӗ вите, унта—ӗҫ лашисем. Витесенче таса, ӑшӑ, ҫутӑ. Юнашарах пӗтӗ кӗсресемпе тихасем валли ятарласа тунӑ вите. Ку витере лашасем тӑмалли вырӑнсем пӳлӗмлӗ, вӗсене хӑмаран тунӑ. Пӳлӗмсем ҫине лашасен ятне ҫырнӑ.

Ӗне витисем. Вӗсенчен пӗр витине 100 ӗне вырнаҫмалӑх кӑҫал туса лартнӑ. Унӑн урайне, апат памалли вӑлашкисене цементран тунӑ. Урайӗнче шӗвек юхмалли каналсемпе трубасем пур. Ку витере ӗнесене апат парас тата шӑварас ӗҫсене пӗтӗмӗшпех механизациленӗ.

— Ку ӗне миҫе литр сӗт парать? — ыйтрӗ экскурсантсенчен пӗри, симментал ӑратлӑ пысӑк ӗне ҫине кӑтартса.

— Вӑл ӗне «Дочка» ятлӑ, кунне 28 литр сӗт парать,—ӑнлантарать экскурсовод Пупин юлташ.

Выльӑх апачӗ хатӗрлекен цех. Вӑл нумайӑшне питӗ интереслентерчӗ. Кунта «ЗК-05» йышши 2 кормозапарник вырнаҫтарса лартнӑ, вӗсем ҫумӗнче икӗ пысӑк чан. Унтах соломорезка, корнеклубнерезка, корнеклубнемойка, универсальнӑй арман т. ыт. те. Вӗсем пурте электромоторсемпе ӗҫлеҫҫӗ.

— Каласа парӑр-ха, ку цехра кунне мӗн чухлӗ апат пӗҫерсе хатӗрлетӗр? — ыйтать Вӑрнар районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ М. Федоров юлташ.

— Апат хатӗрлекен цех талӑкӗпех ӗҫлет, унта 5 ҫын ӗҫлет. Кунне 12 тонна таран улӑм пӗҫерсе хатӗрлетпӗр, ӑна посыпкӑпа сапса паратпӑр та ӗнесем питӗ юратса ҫиеҫҫӗ. Пирӗн пӗр пӗрчӗ улӑм та сая каймасть. Кӗркунне, апата хатӗрлесе пама тытӑниччен, кашни ӗнерен 6—8 литр сӗт суса илнӗ пулсан, халӗ 15—18-шар литр суса илетпӗр. Пӗр кунхи рационта силос та, кӑшман та, концентрат та пур, — ӑнлантарать экскурсовод.

Сысна вити. Алӑк умне: «Уруна дезинфекцилемесӗр витене ан кӗр!» тесе ҫырса ҫапнӑ. Экскурсантсем витене кӗнӗ чухне ещӗк ҫине пусса урисене дезинфекцилеҫҫӗ. Витере—шурӑ пысӑк тата брейтовски ӑратлӑ сыснасем. 1951 ҫулта колхоз кашни сысна аминчен 18-шар ҫура илнӗ. Ферма пысӑк тупӑш панӑ. Халӗ кунта 547 сысна.

Пӑру витисене те ҫӗнӗлле, стандартлӑ тунӑ. Вӗсенче ӑшӑ ҫителӗклӗ. Вите урайӗсем икӗ хутлӑ. Тӗрлӗ чир-чӗр илсе кӗмелле ан пултӑр тесе, ҫавӑн пекех урасене дезинфекцилеме алӑк умне дезинфекцилекен материал хунӑ ещӗксем лартнӑ.

Экскурсантсем обозпа ут тавраш ӗсне пӑхаҫҫӗ. Урапа-ҫунасем, сӳсменсем кашни бригадӑн уйрӑммӑн тӑраҫҫӗ. Вӗсене бригадир наряҫӗ тӑрӑх ҫеҫ парса яраҫҫӗ. Картишӗнчех сӳсмен юсамалли, урапа-ҫуна юсамалли тата ҫӗнӗрен тумалли мастерскойсем пур. Колхоз транспорт инвентарӗсемшӗн укҫа-тенкӗ тӑкакламасть.

— Ку япала кашни колхозрах ҫакӑн пек кирлӗ, пирӗн те ҫавӑн пек тумалла,— тет Ҫӗмӗрле районӗнчи «Полярная звезда» колхоз председателӗ Н. Михайлов юлташ.

Хӑнасем ҫавӑн пекех ҫу заводне, машина сарайӗсене, зернохранилищӗсене, клубпа кинотеатра, амбулаторине, радиоузела, электростанцине, обществӑллӑ мунчана т. ыт. ҫӗре те ҫитсе курчӗҫ. Экскурси виҫӗ сехет хушши пычӗ.

Хӑнасем нумай курчӗҫ, нумай вӗренчӗҫ.

Экскурси хыҫҫӑн канашлу ӗҫе тытӑнчӗ.

## Колхозсен обществӑллӑ хуҫалӑхне ӳстермелли майсем

***(С. Коротков юлташ тунӑ докладран)***

Эпир кунта пӗр-пӗрин опычӗпе паллашма пухӑннӑ. Докладра эпӗ пӗре те хамӑрӑн ӗҫсемпе мухтанасшӑн мар, анчах хӑшпӗр опытсемпе паллаштарма тивӗҫлӗ, тесе шутлатӑп.

Пирӗн умра питех те пысӑк, ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Ҫавсем ҫинчен пӗрле каласса татӑлса, пирӗн ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗпе Совет правительстви Чӑваш республики ялхуҫалӑхӗ умне лартнӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫламалли тата колхозсене малашне организацине хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетмелли майсене палӑртмалла.

Артель хуҫалӑхне ертсе пырас ӗҫре председатель тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать, артеле малалла аталантарса пырасси унтан нумай килет. Ҫавӑнпа та манӑн, чи малтан, колхоз председателӗн ролӗ ҫинче чарӑнса тӑрас килет.

Пирӗн ялсенче те, районсенче те темиҫе ҫул каярах колхоз председателӗ ҫине кирлӗ пек пӑхманни тата унӑн ӗҫне хакламанни пулнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ колхоз председателӗсем хушшинче ялхуҫалӑх специалисчӗсем е опытлӑ работниксем-практиксем сахал. Вӗсене колхоз председателӗсем пулса ӗҫлеме ярас тесен, турткалашса тӑни сисӗнет. Тепӗр майлӑ та пулать, район руководствинче тӑракан ҫынсем председатель пулса ӗҫлесе колхоза хӑпартма тытӑнсан, ҫав ҫынна часах «выдвижени йӗркипе» районти пӗр-пӗр паллӑ мар ӗҫе те пулин куҫарса лартаҫҫӗ, колхоза лайӑх председательсӗр тӑратса хӑвараҫҫӗ. Вара ни унта, ни кунта усси пулмасть. Ҫакӑн пек туни, паллах, тӗрӗс мар.

Колхоз председателӗ пулса ӗҫлесси — чи чыслӑ, чи интереслӗ ӗҫ. Ялхуҫалӑх ӗҫне юратсан—председательте ӗҫлетӗн-и, бригадирта ӗҫлетӗн-и, фермӑра ӗҫлетӗн-и—пур ҫӗрте те тӗлӗнмелле ӗҫсем тума пулать.

Колхоз председателӗ хӑйӗн ӗҫне юратмалла, унӑн куллен вӗренсе пӗлӳлӗхе хӑпартса пымалла. Политика тӗлӗшӗпе ҫӳлӗ пусӑмра тӑрсан, ӗҫе юратсан, ӗҫе пӗлсе ертсе пырсан, ӗҫре тӳрӗ пулсан кӑна колхоз председателӗ колхозниксен шанӑҫне тӳрре кӑларма пултарать. Массӑсене организацилесе пыма пӗлни кирлӗ, колхозра ҫирӗп актив пулмалла. Актив тӳрӗ ӗҫченсенчен, малта пыракан ҫынсенчен тӑмалла. Ҫавӑн пек пулсан ӗҫ каять.

Партипе правительство колхозсен хуҫалӑхне аталантарасшӑн куллен тӑрӑшаҫҫӗ, ҫӗнӗ техника тата минераллӑ удобренисем нумай параҫҫӗ. Эпир вӗсемпе туллин усӑ кураймастпӑр-ха. Унсӑр пуҫне пирӗн хамӑр ӗҫре ытти ҫитменлӗхсем те нумай. Чылай колхозсенче тырпул тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗ ҫӳлӗ пусӑмра мар, унӑн тухӑҫлӑхӗ те пысӑк мар.

Халӗ хӗл вӑхӑчӗ тӑрать. Пирӗн хӗрсех хире тислӗк кӑлармалла, ытти удобренисем хатӗрлемелле. Анчах Вӑрнар районӗнчи, ҫавӑн пекех ытти районсенчи чылай колхозсен хирӗсенче те тислӗк курӑнмасть-ха. Эпир хӗллехи агротехникӑллӑ ӗҫсене начар пурнӑҫласа пыратпӑр. ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем те ку ыйтӑва ҫивӗччӗн лартмаҫҫӗ, «хуҫалӑх ыйтӑвӗ» тесе ку ӗҫ колхозсенче мӗнле пыни ҫинчен хӑйсен ларӑвӗсенче сӳтсе явмаҫҫӗ.

Ҫитес 2—3 ҫул хушшинче тырпул тухӑҫлӑхне чылай ӳстермелле. Ҫавӑнпа парти райкомӗсен те, пуҫламӑш парторганизацисен те ку енӗпе ытларах ӗҫлемелле. Халӗ, пуҫламӑш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухӑвӗсем пынӑ вӑхӑтра, колхозсенчи пуҫламӑш парторганизацисен пухӑвӗсенче тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессипе выльӑх-чӗрлӗх ӗҫне лайӑхлатасси ҫинчен каласмасан мӗн ҫинчен калаҫмалла-ши?..

Пирӗнпе юнашар Молотов ячӗпе тӑракан колхозра 3—4 ҫул каялла хӗллехи вӑхӑтра тислӗк куписем нумай курма пулаччӗ, халӗ ҫук. Ҫӗре вырӑнти тата минераллӑ удобренисемпе ҫемҫетмен пирки унта юлашки ҫулсенче тырпул тухӑҫлӑхӗ чакнӑ. Пирӗн районти 10 колхозра тырпул тухӑҫлӑхӗ темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ пӗр вырӑнта тӑрать. Тырпул тухӑҫлӑхӗ енӗпе эпир ҫавӑн пек пӗр вырӑнта тӑма пултараймастпӑр. Пӑхӑр-ха, юлташсем, пирӗн Тӑван ҫӗршыв сутҫанталӑка улӑштарса ҫӗнетес, тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас тесе мӗн-мӗн тумасть! Атӑл, Днепр, Дон, Аму-Дарья ҫинче коммунизмӑн аслӑ стройкисене тӑваҫҫӗ. Ҫӗршыв гигантла утӑмсемпе малалла каять. Пирӗн колхозсен те ӳсмелле, кунпа мар, сехетпе ӳсмелле.

Малта пыракан колхозсем чӑн та ӳсеҫҫӗ, малалла пысӑк утӑм тӑваҫҫӗ. Вӑрнар районӗнчи Жданов ячӗпе тӑракан, Йӗпреҫ районӗнчи *«Путиловка», Канаш районӗнчи* Йӑлмачча колхозӗсенче ҫакӑ уйрӑмах палӑрать. Унта пултаруллӑ председательсем тупса лартрӗҫ те, халӗ ӗҫ каять.

Эпир пӗр ҫул хушшинчех тырпул тухӑҫлӑхне пӗр хут ҫурӑ ӳстерме пултаратпӑр-и? Пултаратпӑр. Пӗр-ик ҫул хушшинче выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫне икӗ хут ӳстерме тата колхозниксене ӗҫкунӗпе тырӑ валеҫсе парассине икӗ хут таран ӳстерме пултаратпӑр-и? Пултаратпӑр.

Аслӑ ҫулпуҫ Сталин юлташ тӑрӑшнипе пирӗн ялхуҫалӑхӗ хӑватлӑ техникӑпа хӗҫпӑшалланчӗ. Халӗ пирӗн хамӑрӑн тӑрӑшса ӗҫлени ҫеҫ кирлӗ. Ҫӗрӗҫ культурине лайӑхлатмалла, ҫӗре тарӑнрах сухалама тытӑнмалла. Эпир хамӑр колхозра ҫавӑн пек тӑватпӑр та. Темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ сухалакан ҫӗрӗн сийне тарӑнлатсах пыратпӑр.

Вӑйлӑ тырпул туса илес тесен ҫӗре тарӑн сухаламалли паллӑ, ӑна пирӗн опыт лайӑх кӑтартса пачӗ. Ҫапах та ялхуҫалӑх специалисчӗсенченех хӑшпӗрисем: вырӑссен ялхуҫалӑх наукин корифейсем Тимирязев, Костычев тата Докучаев сухалакан ҫӗрӗн сийне тарӑнлатасси ҫинчен каламан, теме пӑхасшӑн. Вӑл тӗрӗс мар! Вӗсем ҫӗре ӗҫлемелли тӗп орудиҫ сухапуҫ пулнӑ вӑхӑтра пурӑннӑ. Эпир вара ялхуҫалӑхӗнче малта пыракан хӑватлӑ техника—«ДТ-54», СТЗ-НАТИ, «С-80» тракторсем ӗҫленӗ вӑхӑтра пурӑнатпӑр. Тимирязев, Костычев тата Докучаев пирӗн вӑхӑтра пурӑннӑ пулсан, вӗсем пурте пӗр харӑсах «тарӑнрах, тата тарӑнрах сухалӑр!», тесе каланӑ пулӗччӗҫ.

Ҫӗрӗн производительнӑй вӑйне хӑпартмалла, ӑна кирлӗ пек тата юратса ӗҫлемелле. Вара ӗҫ малалла кайӗ тата колхозсен хуҫалӑхӗ ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗпе пирӗн Совет правительстви хушнӑ пек аталанса пырӗ.

Тарӑн сухаласси тракторӗстсенчен нумай килет. Вӗсене ӗҫшӗн лайӑхрах тӳлемелле, вӗсемпе ҫӗре тарӑн сухаласси ҫинчен каласса татӑлмалла. Май килнӗ таран трактористсене тата ытти механизаторсене харпӑр хӑй колхозӗнчи ҫынсенчен вӗрентсе хатӗрлемелле. Пирӗн трактор бригадин бригадирӗ те, трактористсем те—пурте хамӑр колхозран. Паллах, вӗсем хамӑр колхоз интересӗсемшӗн ытларах тӑрӑшаҫҫӗ, пысӑк пахалӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Практика ҫакна кӑтартса парать: ӑҫта ытти ҫӗртен пынӑ кадрсем ӗҫлеҫҫӗ, унта вӗсем ӗҫе пысӑк пахалӑхпа тума тӑрӑшмаҫҫӗ.

Пирӗнпе юнашар Кушлавӑш колхозӗнче те тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе тӗлӗнмелле ӗҫ туса иртерме пулать. Анчах унта ҫӗрӗҫ культурине хӑпартас енӗпе сахал ӗҫлеҫҫӗ, колхоз председателӗ Е. Трошкина юлташ уншӑн тӑрӑшмасть. Район руководителӗсем те кунти ҫитменлӗхсемпе килӗшсе пурӑнаҫҫӗ. Ҫитменлӗхсемпе килӗшсе ларни ӗҫе сиен кӳрет. Ун пек йӗркене пӗтермелле.

Тислӗк ҫинчен. Эпир унӑн усӗпе пурте лайӑх пӗлетпӗр. Анчах та ӑна уйхире кӑларас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлетпӗр, туртӑм вӑйӗпе ку ӗҫре туллин усӑ курмастпӑр. Тислӗк кӑларас ӗҫе мӗнпур туртӑм вӑйӗнчен 20 процентне уйӑрсан та темӗн чухлӗ тислӗк кӑларма пулать. Тислӗк кашни колхозрах ҫителӗклӗ таран пур. Хире тислӗк ытларах кӑларсан амбарта тырӑ нумайрах пулӗ.

Тырпулпа выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗ пӗрпӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Тырпул нумайрах пулсан, выльӑх-чӗрлӗх те нумай пулать, выльӑх-чӗрлӗх нумай пулсан, тырпул татах та вӑйлӑрах пулӗ.

Пирӗн колхоз условийӗсенче пуринчен ытла тислӗк тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартать. Ҫавӑнпа та эпир хӗлле уй-хире 60 пин лав тислӗк кӑларма палӑртнӑ. Ҫак плана пурнӑҫа кӗртес тесе, фермӑсенчи, ҫавӑн пекех колхозниксен килӗсенчи тислӗке пӗр килограмм юлмиччченех кӑларатпӑр. Ӗҫрен пушӑ лашасемпе пуринпе те тислӗк тӑкнӑ ҫӗрте усӑ куратпӑр.

Пирӗн колхозра та, ытти колхозсенче те уя кӑларма юшкӑн тӑпри тата торф пур. Вӗсене те уя илсе тухма тӑрӑшмалла. Эпир Зеленовка ялӗ патӗнче ҫӗрӗк тӑпри вырӑнӗ тупрӑмӑр, ӑна та уя нумай кӑларатпӑр. Кашни колхозрах ҫавӑн пек тумалла. Торфпа, тислӗкпе ытларах усӑ курсан, пирӗн уй-хирсем йӑлтах урӑхланса ҫӗнелӗҫ.

Татӑклӑнах эпӗ ҫакна калама пултаратӑп: пирӗн Вӑрнар районӗнче, ҫавӑн пекех республикӑри ытти районсенче те клевер хӗл чипер каҫман пирки мар, чӑннипе ҫӗре известлемен пирки пӗтет. Ҫӗре известлесен, нумай ҫул ӳсекен курӑксен тухӑҫлӑхӗ те, вӑрри те лайӑх пулать. Ҫӗре известлессине тивӗҫлипе хакламалла. Ҫав майпа кӑна ӳсентӑраншӑн сиенлӗ тӑпра йӳҫӗкне пӗтерме пулать.

Хӗллехи вӑхӑтра колхозра ӗҫсем питӗ нумай. Ҫавӑн пирки хӑшпӗрисем туртӑм вӑйӗ ҫитмест, тесе калама пӑхасшӑн. Туртӑм вӑйӗпе пӗлсе усӑ курсан вӑл пур ӗҫсене тума та ҫитет. Туртӑм вӑйӗнчен уйрӑм ушкӑнсем тумалла. Вара ӗҫ каять. Халӗ пур ӗҫсем те вӑхӑтра, йӗркеллӗ пулса пыраҫҫӗ. Ҫапла туни, тепӗр енчен, *колхозниксен ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетет.*

Пирӗн колхоз тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас ӗҫре, паллах, пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ, анчах та ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларма пултараймастпӑр. Эпир пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн хамӑрӑн пур резервсене те, пӗтӗм вӑя мобилизацилетпӗр. Хамӑр умма пысӑк задача лартрӑмӑр. 1952 ҫулта пирӗн кирек мӗнле пулсан та 1951 ҫулхинчен 35 процент ытларах тырпул туса илмелле, кашни ӗҫкунӗ ҫине 6-шар килограмм тырӑ валеҫсе памалла. Вӑл пирӗншӗн закон пулать. Кашни колхозрах ӑна ҫавӑн пек туни кирлӗ.

Кунпа пӗрлех эпир 1952 ҫулта техникӑллӑ культурӑсене 1951 ҫултинчен 5 хут ытларах акатпӑр. мӗншӗн тесен вӗсем колхоза тупӑш нумай параҫҫӗ. Кӑҫал тупӑш паракан тӗп отраслӗсем пирӗн колхозра техникӑллӑ культурӑсем, выльӑх-чӗрлӗх, уй-хир ӗҫӗ пулса тӑраҫҫӗ. 1952 ҫулта хамӑр колхозӑн тупӑшне 3 миллион тенке ҫитерме пӑхнӑ, вӑл шутран выльӑх-чӗрлӗх тупӑшӗ 60 процент пулмалла.

Пирӗн колхозӑн майракаллӑ шултра выльӑхсем халӗ 520 пуҫ кӑна, ку сахалтарах-ха. Эпир вӗсен шутне татах ӳстеретпӗр. Сӑвакан ӗнесемех 400 пулмалла.

Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илмелли условисенчен тепри вӑл—вӑрлӑх. Эпир сортланӑ, лайӑх шӑтакан вӑрлӑха хӗреслӗ майпа акатпӑр.

Юлашкинчен, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илмелли тепӗр услови вӑл—вӑхӑтра акни. Тырпула кӗске срокра акса пӗтермелле.

Урӑх мӗн каламалли пур ӗнтӗ? Каламаллине каларӑм. Эпӗ каланисем пурне те паллӑ. Хӑшпӗр колхоз председателӗсем: «вӗсене эпир пӗлетпӗр», тесе шутлаҫҫӗ. Пӗлеҫҫӗ, анчах пурнӑҫламаҫҫӗ. Ҫав «пӗлекен» тата ӗҫре чӑрмантаракан шухӑшсене пӗтермелле, кирлӗ пек ӗҫлеме тытӑнмалла.

Пирӗн колхозсене политика енчен тӗрӗс тата ӗҫе пӗлсе ертсе пымалла, хамӑрӑн ӗҫе тӗрӗс туса пымалла.

Ҫаксем пулса тӑраҫҫӗ ӗнтӗ колхозсен хуҫалӑхӗсене малалла аталантарса пымалли ҫулсем.

* * *

Канашлу участникӗсем ыйтнипе колхозри выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗ мӗнле тӑни ҫинчен колхоз председателӗн выльӑх-чӗрлӗх енӗпе ӗҫлекен заместителӗ, Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ П. П. Пупин юлташ каласа пачӗ.

Юлашкинчен ВКП(б) обкомӗн секретарӗ Н. А. Шмаков юлташ пысӑк сӑмах тухса каларӗ. Вӑл канашлура сӳтсе явнӑ ыйтӑва, унта кӑларса тӑратнӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пыма, малта пыракан опыта сарма тата уйрӑмах выльӑх-чӗрлӗхе тӗрӗс-тӗкел хӗл каҫарма чӗнчӗ.

**Е. ВОЛКОВ.**

## *Колхозсенчен пӗлтереҫҫӗ*

ОКТЯБРЬСКИ. «Звезда» колхозра ҫуракипе лайӑх хатӗрленессишӗн бригадӑсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту анлӑ сарӑлнӑ. Колхоз уя икӗ пин лава яхӑн тислӗк кӑларнӑ, 68 тонна минераллӑ удобренисем кӳрсе килнӗ. 750 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ. **Г. СМИРНОВ.**

ПАРАЧКАВ. Заготзернора ӗҫлекен П. Захаров ҫырмасенче тата ытти ҫӗрте ӳсекен «дурнишник» текен курӑк вӑррисенче ҫу пуррине асӑрханӑ. Ҫу кӑлармалли культурӑсем тӗлӗшпе ӗҫлекен наукӑпа тӗпчев институчӗ ҫав курӑк вӑррисенче ҫу чылай пуррине палӑртнӑ. Институт асӑннӑ курӑкпа усӑ курма май пуррине тӗпчесе пӗлет. **В. ТОНЫШЕВ.**

## Тимӗр-тӑмӑр пухса параҫҫӗ

СЕНТЕРВӐРРИ. Районти чылай предприятисемпе артельсен коллективӗсем тата колхозсем Тӑван ҫӗршыва тимӗр-тӑмӑр пухса парас ӗҫе тивӗҫлипе туса пыраҫҫӗ. Ивановӑри кирпӗч завочӗн коллективӗ иртнӗ ҫулти IV-мӗш кварталта тимӗр-тӑмӑр пухса памалли плана декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлнех иртерсе тултарчӗ, промышленность валли планран иртерсе тимӗр-тӑмӑр нумай пухса пачӗ. Ҫавӑн пекех «Молния», «Родина», «Светлый путь» колхозсем те 2,5—3-шер тонна хура металл пухса леҫсе пачӗҫ.

Тимӗр-тӑмӑр пухас ӗҫ ытти колхозсенче те сарӑлсах пырать.

# Корейӑри ӗҫсем

### ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗн паянхи пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай Халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те Америкӑпа Англи интервенчӗсене тата Ли Сын Ман ҫарӗсене хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ, тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтереҫҫӗ.

Январӗн 7-мӗшӗнче хӗвелтухӑҫӗнчи фронтра, Янгуран ҫурҫӗртерехре, тӑшман Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем тӑракан пысӑк пӗлтерӗшлӗ темиҫе сӑрта тытса илме хӑтланнӑ, темиҫе хутчен те хытӑ тапӑнса атакӑсем тунӑ. Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем хӑватлӑн хирӗҫ тӑнипе, пула, тӑшманӑн каялла чакма тивнӗ, ҫавӑн чухне тӑшман чылай сиен курнӑ.

Январӗн 8-мӗшӗнче Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтакӗсем тӑшманӑн 4 самолетне персе ӳкернӗ, 3 самолетне сиенленӗ, унччен ҫав самолетсем Корейӑн ҫурҫӗрти пайӗнче пурӑнакан мирлӗ халӑх ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ ҫӗре хутшӑннӑ пулнӑ.

ПХЕНЬЯН, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ январӗн 9-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ:

Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те тӑшмана хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ.

Январӗн 8-мӗшӗнче хӗвеланӑҫӗнчи фронтра Ли Сы Ман ҫарӗсен икӗ батальонӗ, 10 танк ытла пулӑшнипе, Халӑх ҫарӗн позицийӗсем ҫине 4 хутчен тапӑннӑ. Анчах тӑшмана каялла хӑваласа янӑ, унӑн салтакӗсене тата техникине нумай пӗтернӗ.

Вӑтаҫӗрти фронтра тӑшман Халӑх ҫарӗн позицийӗсем ҫине 6 хутчен тапӑннӑ. Ку атакӑсене Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем кашнинчех сире-сире янӑ.

Хӗвелтухӑҫӗнчи фронтра Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем уйрӑм вырӑнсенче ҫапӑҫнӑ, Америка ҫарӗн 2 ротине пӗтерсе тӑкнӑ.

Январӗн 9-мӗшӗнче Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтакӗсем тӑшманӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ.

## Америка авиацийӗн Корейӑри тискер ӗҫӗсем

ПХЕНЬЯН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). 1952 ҫулӑн малтанхи эрнинче Америка бомбардировщикӗсемпе реактивлӑ самолечӗсем Пхеньян хулине тата хула ҫывӑхӗнчи ялсене кунӗн-ҫӗрӗн тискеррӗн тапӑннӑ. Январь уйӑхӗнчи ҫичӗ кун хушшинче хула ҫине тата хула ҫывӑхӗнчи районсене фугаслӑ бомбӑсемпе вут тивертекен бомбӑсем 500 ытла пӑрахнӑ. Америкӑн реактивлӑ истребителӗсем Пхеньяна пымалли ҫулсем ҫинче кашни лава, кашни машинӑна тата ҫуран ҫынна тапӑнса пулеметсемпе переҫҫӗ. Мирлӗ хулана ҫавӑн пек тапӑннипе пула Пхеньянра халӑх пурӑнакан ҫуртсене нумай аркатнӑ тата вут тивертсе ҫунтарса янӑ, унта 70 ҫын ытла, пуринчен ытларах хӗрарӑмсемпе ачасем, вилнӗ тата аманнӑ.

Америка авиацийӗ тахҫанах ӗнтӗ Пхеньян хулинчен ишӗлчӗксен купи туса хунӑ. Ҫапах та Америкӑн сывлӑшри вӑрӑ-хурахӗсем, ООН паллисемлӗ самолетсемпе вӗҫсе пырса, кашни кунах хула ҫине бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ тата пулеметсемпе переҫҫӗ. Пхеньян хули пулнӑ вырӑнта чулсемпе тӑм купи кӑна хӑварасшӑн.

Пхеньян хули Халӑх Комитечӗн председателӗн заместителӗ Пак Чон Сик ТАСС корреспондентне ҫапла каласа панӑ:

Иртнӗ ҫулталӑкра Америкӑн Корейӑри командованийӗ Пхеньян ҫине кашни кунах хӑйӗн бомбардировщикӗсене, реактивлӑ истребителӗсене тата штурмовикӗсене ячӗ. Сывлӑшри вӑрӑ-хурахсем вӗҫсе пыни ҫинчен халӑха систерекен сигнал илтӗнмен кун Пхеньянра пӗрре те пулман. США самолечӗсем кашни кун Пхеньян хулине тискеррӗн тапӑнни Америка империалисчӗсем Корея халӑхне хирӗҫ питӗ пысӑк преступлени туни пулса тӑрать, мӗншӗн тесен вӗсем мирлӗ тата никам хӳтӗлемен хулана, ҫар предприятийӗсемпе склачӗсем ҫук хулана тапӑннӑ. Ҫавӑн пек тапӑннин пӗртен-пӗр тӗллевӗ мирлӗ халӑха пӗтересси тата хуларан ишӗлчӗксен купи туса хурасси пулнӑ. Америка летчикӗсем Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн кӑвак ялавӗпе витӗнсе хӑрушӑ ӗҫсем туни ҫак цифрӑсенчен курӑнать.

Иртнӗ ҫулталӑкра Америка авиацийӗ Пхеньян хулине 2 пин хут ытла тапӑннӑ. Хулана тапӑннӑ ҫӗре пӗтӗмпе тӗрлӗ йышши 5 пин ытла самолет хутшӑннӑ. Бомбардировщиксемпе истребительсем хула ҫине фугаслӑ, осколоклӑ тата вут тивертекен бомбӑсем пӗтӗмпе 42 пин ытла пӑрахнӑ. Пхеньян хулин территорийӗ пӗтӗмпе 54 тӑваткал километр йышӑнать. Ҫапла вара, хулари кашни тӑваткал километр ҫине пӗр пине яхӑн бомба пӑрахнӑ.

Хулан хӑшпӗр районӗсенчи кварталсенче нимӗн те юлман, бомбӑсем ҫурӑлнипе пулнӑ ҫурт-йӗрсен ишӗлчӗкӗсемпе тулнӑ ҫӗр шӑтӑкӗсем кӑна.

Хулари мирлӗ халӑха нумай вӗлернӗ тата амантнӑ. Кун ҫинчен калакан цифрӑсенчен Америкӑри вӑрҫӑ пуҫаракансем питӗ пысӑк айӑплӑ ӗҫсем туни курӑнать. Америка бомбисемпе пульлисенчен хулара хӗрарӑмсем, ачасем тата стариксем — пӗтӗмпе 15 пин ҫын ытла вилнӗ. Халӗ вӗсен тӑванӗсем, тӑлӑха юлнӑ арӑмӗсем, ачисем, аппӑшӗсемпе йӑмӑкӗсем, пиччӗшӗсемпе шӑллӗсем вӗсемшӗн кулянаҫҫӗ. Пиншер ачасем сӑпкара вилсе выртнӑ. Тӑлӑх ачасен 10 ҫуртне аркатнӑ. Ку ҫуртсенчи ачасене вӗлерсе пӗтернӗ. Пхеньянра пурӑнакансенчен 7 пин ҫын аманнӑ.

Пхеньян ҫине хӑйӗн сывлӑшри вӑрӑ-хурахӗсене ярса, Америка командованийӗ мирлӗ халӑха пӗтерес тӗллев тытнӑ, халӗ те ҫавӑн пек тӗллев тытать. Америка командованийӗ Корея халӑхӗн ҫирӗплӗхне хавшатма, ӑна америка салтакӗн ури умне чӗркуҫлентерме тӑрӑшать. Анчах агрессорсем йӑнӑшрӗҫ. Вӗсем темӗн тӗрлӗ тискер ӗҫсем тунипе те Корея халӑхне парӑнтарма пултараймӗҫ.

## *Америка империалисчӗсен агрессиллӗ ӗҫӗсем пирки „Женьминьжибао“ хаҫат мӗн ҫырать*

ПЕКИН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). 1951 ҫулхи декабрӗн 26-мӗшӗпе 31-мӗшӗнче тата кӑҫалхи январӗн 6-мӗшӗнче Америка самолечӗсем Китай Халӑх Республикин территорийӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫапла вӗсем Ляодун провинцийӗнчи темиҫе ҫынна амантнӑ, темиҫе ҫурта аркатнӑ. Кун пирки Китай халӑхӗ хытӑ тарӑхать, ҫавӑн пек тискер ӗҫсене хирӗҫ хытӑ протестлет.

«Женьминьжибао» хаҫат, Америка интервенчӗсем Китай халӑхне хирӗҫ преступленисем туни ҫинчен пӗлтерсе, паянхи умстатьяра: «Америкӑн сывлӑш ҫарӗ агрессиллӗ провокациллӗ ӗҫсем тунинчен Америка империализмӗн тискер сӑн-сӑпачӗ, вӑл Корейӑри агрессилӗ вӑрҫа сарма хӑтланни уҫҫӑнах курӑнать», тесе ҫырать. Малалла Корейӑра мир тӑвасси ҫинчен пыракан калаҫусем ҫинчен ҫырса, хаҫат ҫапла калать: «Америка делегачӗсем калаҫури йывӑрлӑхсене пӗтерессишӗн мар, вӗсем Корея Халӑх ҫарӗпе Китай халӑх добровольцӗсен делегацине калаҫусене чарса лартассипе хӑратса, тупӑсем, бомбӑсем, снарядсем пулӑшнипе калаҫма тытӑнассипе юнаса ирӗксӗрлеме пӑхаҫҫӗ, вӗсем ҫав майпа хӑйсен сӗнӗвӗсене йышӑнтарасшӑн».

Малалла хаҫат ҫапла ҫырать: Америка империализмӗ мире курайманнине, пирӗн халӑха курайманнине пирӗн пӗтӗм халӑхӑн лайӑхрах ӑнланса илес пулать. Пӗтӗм тӗнчери мире юратакан халӑхсен хӑйсен сыхӑлӑхне ӳстермелле.

Америка империалисчӗсем кирек мӗнле ҫулпа пырсан та, хӑйсен агрессиллӗ тӗллевӗсене пурнӑҫлама пултараймӗҫ.

Америка бомбардировщикӗсем пирӗн территори ҫине бомбӑсем нумай пӑрахни тата пулеметсемпе пени пирӗн халӑха тата хуҫалӑха пысӑк сиен кӳчӗ, нумай ҫынсем вилчӗҫ тата аманчӗҫ. «Америка империалисчӗсене халӑх юнне юхтарнӑшӑн хытӑ айӑпласа наказани памалла», тесе ҫырать юлашкинчен хаҫат.

## Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Португалире ҫар базисем тӑваҫҫӗ

РИМ, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). «Аванти» хаҫатра пичетленӗ статьяра ҫапла ҫырнӑ: Португалипе иртнӗ ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче ҫар килӗшӗвӗ туса алӑ пуснӑ хыҫҫӑн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫав ҫӗршывӑн ҫарӗсене, базисене тата ҫар промышленноҫне контроллесе тӑма тытӑннӑ. Килӗшӳ тӑрӑх, Америка правительстви Португалие экспертсем, сӑнавҫӑсем тата консультантсем нумай янӑ. «Хӑрушсӑрлӑха пӗрле хӳтӗлес» сӑлтавпа Америкӑн ҫар представителӗсем Португалин шалти ӗҫӗсене яланах хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем тӗрӗслесе тӑнипе ҫӗнӗ аэродромсем тӑваҫҫӗ, кивӗ аэродромсене юсаҫҫӗ, Португали ҫарне Америкӑри йӗркесем тӑрӑх вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ.

Азорски утравсем ҫинче тата Мадейра утравӗ ҫинче американецсем стратеги енӗпе пысӑк пӗлтерӗшлӗ ҫар базисем тӑваҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра США-па Португали хушшинче Америка ҫарӗсене пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах Португали территорийӗпе утравӗсем ҫине илсе пырасси ҫинчен калаҫусем пыраҫҫӗ.

## Египет шкулӗсенчи акӑлчан-преподавательсене ӗҫрен кӑларнӑ

ПАРИЖ, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Каиртан ҫавӑн ҫинчен пӗлтернӗ: Египет ҫутӗҫ министрӗ Хуссейн-бей хушнӑ тӑрӑх Египетра уйрӑм ҫынсем тытса тӑракан шкулсенче акӑлчан-преподавательсене пурне те ӗҫрен кӑларнӑ. Правительство шкулӗсенче акӑлчан-преподавательсене иртнӗ ҫулхи декабрь уйӑхӗнчех ӗҫрен кӑларса янӑ.

## Сицилири ĕçсыннисем совет делегачĕсене саламлаççĕ

РИМ, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Сицилири Мессине тата Сиракуза хулисенче январĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче халăх демонстрацийĕсем пулнă. Демонстрацисем ку хуласене Совет Союзĕнчи обществăллă организацисен делегацийĕ пынă ятпа пулнă. Мессине хулинче вокзал умĕнчи площаде темиçе пин ĕçсынни пухăннă. Университет залĕнче совет делегачĕсене чысласа митинг ирттернĕ. Митингра совет делегачĕсем Лебедевăпа Березин, Ĕç Палатин секретарĕ Ди Каара, «Итали—СССР» обществин секретарĕ Берти профессор сăмах тухса каланă.

Мессине хулинчен Сиракуза хулине каймалли çул çинчи Лентини, Августа тата ытти хуласенчи ĕçсыннисем те Совет Союзĕнчен пынă хăнасене саламланă.

Сиракуза хулинчи наука институчĕн суртĕнче халăх митингĕ пулнă. Митинг Итали халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи туслăха çирĕплетес шухăшпа иртнĕ. Совет делегачĕсене чысланă ятпа хулара йышăну ирттернĕ. Унта Сиракуза хулин мэрĕ, Греко либерал, муниципальнăй правлени членĕ Пиччоне христианла-демократ, коммунистсен партийĕн федерацийĕн секретарĕ Буджанка, социалистсен партийĕн федерацийĕн секретарĕ Дженовезе, Ĕç Палатин секретарĕ Фьораванти, хулари обществăллă организацисен представителĕсем тата культура деятелĕсем пынă.

РИМ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕнчи обществăллă организацисен делегацийĕ халĕ Сицилире курса çÿрет. Ĕнер делегаци, «Итали—СССР» обществин генеральнăй секретарĕ Берти профессорпа тата вырăнти демократиллĕ организацисен руководителĕсемпе пĕрле, Сиракуза районĕнчи поселоксенче пулнă. Ку поселоксем нумай пулмасть шыв çумай тулнипе уйрăмах пысăк инкек курнă. Кассибизе, Авола, Ното поселокĕсенчи халăх совет делегачĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Совет хăнисем иртсе пыракан çул çине уй-хирте ĕçлекен темиçе çĕр батрак тухнă. Халăх хăнасемпе уй-хирте тата поселоксенче тĕл пулса калаçнă.

Делегатсем Сиракуза хулине таврăннă хыççăн, хула мэрĕ Греко (либералсен партийĕн членĕ) хăнасене чысласа муниципалитет суртĕнче йышăну ирттернĕ. Хăнасене саламласа, вăл Италин шыв тулнипе инкек курнă халăхне Совет Союзĕнчи обществăллă организацисем ăшă кăмăлпа пулăшни «Итали халăхĕпе Росси халăхĕ хушшинчи тăванла туслăха тата ытларах тĕреклетрĕ», тенĕ.

## Порт-Саидри халăх Совет Союзĕн пулă тытмалли карапĕсем çинчи морякĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ

КАИР, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Египетри хаçатсем Совет Союзĕн пулă тытмалли траулерĕсем (карапĕсем) паян Порт-Саида пырса çитни çинчен пĕлтереççĕ. Ку карапсем Владивостока кайма тухнă. Вĕсем çул майĕн Порт-Саида пырса çитнĕ. Хула халăхĕ совет морякĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Ĕнер каçхине çумăр вăйлă çунă пулин те, Порт-Саид гаванне хулари халăх темиçе пин çын пынă. Вĕсем унта совет карапĕсем пырса çитиччен пухăннă.

«Аль-Мысри» хаçат корреспонденчĕ Порт-Саидран хула халăхĕ совет морякĕсене пысăк хаваспа саламласа кĕтсе илни çинчен пĕлтерет.

«Аль-Ахрам» хаçат корреспонденчĕ совет карапĕсем гавань патне пырса çитнĕ чух пристане пухăннă çынсем вĕсене хаваспа туслă сăмахсем каласа кĕтсе илни çинчен пĕлтерет.

## Деголлевецсен çĕнĕ диверсийĕ

ПАРИЖ, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» тата «Либерасьон» хаçатсем де Голль партийĕнчи («Франци халăхĕн пĕрлешĕвĕ» текен партири) фашистсем çĕнĕрен сăтăрла ĕç туни çинчен пĕлтереççĕ. Ĕнер каçхине «палла мар çынсем» Майл урамĕнче, магазин патĕнче, граната ывăтнă. Ку магазин «Юманите» хаçат редакцийĕ çуртĕпе хирĕç. Граната çурăлнипе магазин кантăкĕсем ванса аркаланă. Граната шăпах та редакцире Плевен правительстви вырăнтан тухни çинчен пĕлтерÿ пичетлеме хатĕрленнĕ самантра çурăлнă.

## Франции инĕ çар çынни Берлинăн Хĕвелтухăçĕнчи пайне тарса пынă

БЕРЛИН, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Бунта илнĕ хыпарсем тăрăх, декабрь уйăхĕн иккĕмĕш çуррнче Берлин демократиллĕ секторне Франци çарĕн инĕ служăри тарса пынă. Вĕсем çак: старши сержант Рене Рансберг тата рядовой Марио Алесси-Ангини. Вĕсем Демократиллĕ Германи Республикин сăлтавсене пула хăйсене Демократиллĕ Германи Республикин территорийĕнче пурăнма ирĕк пама ыйтнă.

# ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

## Америкăн „коллективлă мерăсем йышăнасси" текен программи путланса ларнă

ПАРИЖ, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС спецкорр). Политика комитечĕн ĕнер кăнтăрла пулнă ларăвĕнче «коллективлă мерăсем» тĕлĕшпе ĕçлекен комитет докладне сÿтсе явасси вĕçленнĕ. Паян ирхине Политика комитечĕ резолюци проекчĕсене тата вĕсене кĕртме сĕннĕ тÿрлетÿсене пăхса тухма тытăннă.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский ĕнер тухса каланă сăмахра дискуссисен итогне тунă, тĕрлĕ çĕршывсен делегацийĕсен позицийĕсене, çав шутра США хушнипе ялан пĕр сăмахсăр пурнăçласа пыракан делегацисен позицийĕсене те, тĕплĕ тишкерсе тухнă. Вăл Америкăн «коллективлă мерăсем йышăнасси» текен планĕ, США Генеральнăй Ассамблейăра йышăнтарма хăтланнă план путланса ларнине тĕплĕ кăтартса панă, çавна çирĕплетекен сăлтавсемпе тĕслĕхсене илсе кăтартнă. Дискусси пынă вăхăтра чылай делегацисем 11 çĕршыв тăратнă резолюци проектне тÿрлетÿсем кĕртме сĕннĕ. Ку резолюци проектĕнче асăннă доклада ырлама палăртнă, «коллективлă мерăсем» текенскерсене пурнăçлама йышăнмалли çинчен каланă. Чылай делегацисем ку резолюци проектне тÿрлетме сĕннĕ хыççăн, унтан чăннипе нимĕн те тăрса юлман.

Англипе Америка блокĕнчи чылай çĕршывсен делегачĕсем те Америкăн «коллективлă мерăсем йышăнасси» текен программипе килĕшме май çукки çинчен каланă. Вĕсенчен США-на сахалтарах пăхăнса тăракан çĕршывсен делегачĕсем Америкăн çав программи вĕсене килĕшменни çинчен хăюллăн тата уççăн каланă, США-на пĕтĕмпех пăхăнса тăракан хăшпĕр çĕршывсен делегачĕсем вара кун пирки сыхланарах, систермелле çеç, каласа панă. Çапла вара, вĕсем те «коллективлă мерăсем йышăнас» тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн докладне ырлама килĕшмен. Вĕсем 11 çĕршыв тăратнă резолюци проектне кĕртме сĕннĕ тÿрлетÿсем ООН членĕнче тăракан кирек мĕнле çĕршыва та çав «коллективлă мерăсене йышăнас» ĕçрен пăрăнма май параççĕ.

Законсăр йĕркепе ООН ялавĕпе витĕнсе, Америка Корейăна хирĕç вăрçă пуçарчĕ, пысăк преступлени турĕ. Çак историллĕ урок, Америка агрессорĕсем Корейăн паттăр халăхне пусмăра кĕртсе ÿкерме тата Корейăра США империалисчĕсен планĕсене малалла пурнăçласа пымалли плацдарм туса хума хăтланни путланса ларни нимĕн усăсăр иртмен. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене чура пекех пăхăнса тăракан çĕршывсен делегацийĕсем те Америкăн «коллективлă мерăсем йышăнасси» текен планĕ вĕсене авантюрăллă вăрçăсене, Америкăн Корейăри интервенцийĕ пек вăрçăсене хутшăнтарма çĕнĕрен хăтланни, вĕсен нациллĕ никама пăхăнмалăх прависене пĕтерсе лартма çĕнĕрен тапăнни пулать, тесе шутланă. Çавăнпа та вĕсем «коллективлă мерăсем йышăнас» ĕçе хутшăнма килĕшмен.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем тата 11 çĕршыв ячĕпе тăратнă резолюци проекчĕн ытти авторĕсем проекта асăннă тÿрлетÿсене кĕртме килĕшнĕ. Пĕр тÿрлетÿре: «коллективлă мерăсем йышăнас» тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн докладне ырламалла мар, ăна асра тытса тăма çеç килĕшмелле, тенĕ. Тепĕр тÿрлетÿре: ООН членĕсен пурин те асăннă «коллективлă мерăсене» пурнăçлама хутшăнасси е хутшăнас марри çинчен тăракан ыйтăва хăйсем тĕллĕн татса пама право пулмалла, тенĕ. США тата проектăн ытти авторĕсем хăйсем те çав тÿрлетÿсене йышăнма килĕшнĕ. Çакăнтан Америкăн çав планне хирĕç тăрасси анлă сарăлни тата вăйлă пулни лайăх курăнса тăрать. Çав план тăрăх, ООН йышăннă «коллективлă мерăсем» тенипе, ООН ялавĕпе витĕнсе, США империалисчĕсем хăйсен планĕсене пурнăçлама ытти государствăсене те хутшăнтарма шутланă. Çав план путланса ларнă.

Ку плана хирĕç тăни Политика комитечĕн паянхи ларăвĕнче те палăрнă. Паянхи ларура делегатсем мĕншĕн çав резолюци проекчĕшĕн сасăлама килĕшменни тата мĕншĕн уншăн сасăлама килĕшни çинчен каласа панă. Венецуэла, Колумби, Доминикан республики, Чили, Исланди, Швеци тата ытти нумай çĕршывсен представителĕсем, чăннипе илсен, 11 çĕршыв тăратнă резолюцин çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă проектне те тепĕр хут тишкерсе тухнă, унпа килĕшмен. Вĕсем тухса каланинче тĕп тĕллев çапла пулнă: резолюци проектне тÿрлетÿсем кĕртнĕ хыççăн та, унта Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемшĕн «коллективлă мерăсем» текенскерсене пурнăçлама ытти çĕршывсене хутшăнтарма нимĕнле сăлтав та, нимĕнле май та ан юлтăр, тенĕ вĕсем. Ораторсенчен нумайăшĕ хăйсен çĕршывĕсен политикăпа экономика тĕлĕшĕнчи условийĕсене, хăйсен çĕршывĕсен законĕсене, географи тĕлĕшĕнчи вырăнне пула Америкăн «коллективлă мерăсем» текен ĕçĕсене хутшăнма май килменни çинчен, пурлăх тата çар çителĕклĕ парса тăма май çукки çинчен каланă.

Венецуэла делегачĕ—11 çĕршыв резолюцийĕ хатĕрленĕ авторсенчен пĕри. Сапах вăл та Венесуэла çĕршывĕ тулашне çарсем нумай яма май çукки çинчен, кун пирки Венецуэла делегацийĕ Генеральнăй Ассамблейăн 5-мĕш сессийĕнчех «Миршĕн усăллă пĕрлĕх тăвасси çинчен» текен резолюцие сÿтсе явнă вăхăтрах каласа пани çинчен аса илтернĕ. Доминикан республики представителĕ сăмах илнĕ. Вăл «коллективлă мерăсене» пурнăçлас ĕçе хутшăнас ыйтăва пăхса тухнă чухне Доминикан республики хăйĕн ресурсĕсемпе чи малтан çĕршыв ăшĕнчи ĕçсене пурнăçлама усă курмаллине шута илесси çинчен каланă. Вăл кун пирки каласа пама çине тăрсах тăрăшнă. Исландипе Коста-Рика делегачĕсем: пирĕн урăх çĕршывсене яма салтаксем çук, тенĕ. Швеци представителĕ, татăклăнах асăрхаттарса, пирĕн çĕршыв законĕсем тăрăх урăх çĕршывсене çарсем яма юрамасть, çавăнпа та Швеци «коллективлă мерăсене» пурнăçланă çĕре хутшăнма çар уйăрса пама пултараймасть, тенĕ.

Латинла Америкăри чылай çĕршывсен делегачĕсем хăйсем Америка çĕршывĕсем хушшинче тунă килĕшÿсенче илнĕ обязательствăсене пурнăçлассине пĕрремĕш вырăнта тăракан ĕçсем тесе шутлани çинчен уйрăмах çине тăрса каланă. Чилипе Колумби делегачĕсем ку ыйтупа 11 çĕршыв резолюцийĕн çĕнĕрен пăхса тухнă проектне кĕртнĕ тÿрлетÿсĕр пуçне, тепĕр тÿрлетÿ панă. Çак тÿрлетÿ резолюци проектĕнчен тĕнчери çĕршывсен ытти органĕсене кĕрекен е тата тĕнчери çĕршывсем хушшинчи килĕшÿсене алă пуснă çĕршывсене «коллективлă мерăсем» текенскерсене пурнăçлас ĕçе кашнине хăй тĕллĕн хутшăнма ирĕк памалли çинчен калакан пункта кăларса пăрахма хушать. Вĕсем тăратнă тÿрлетÿ тăрăх, çав ĕçе хутшăнас ыйтăва тĕнчери çĕршывсен органĕсем татса памалла, тĕнчери çĕршывсем тунă килĕшÿсенче палăртнипе кăна сÿлте асăннă ĕçе хутшăнма юрать.

Колумбипе Чили сĕннĕ тÿрлетÿпе делегацисем, уйрăмах Латинла Америка çĕршывĕсен делегацийĕсем, хытă интересленме тытăннă. Хăшпĕр делегатсем 11 çĕршыв резолюцийĕн çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă проектне çак тÿрлетĕве тата ытти тÿрлетÿсене кĕртес пирки калаçса татăлма подкомитет тума сĕннĕ.

США представителĕ Боэн васкасах ку сĕнĕве хирĕç тухса каланă. Вăл 11 çĕршыв резолюцийĕн проектне, çапла вара, Америка шухăшласа кăларнă «коллективлă мерăсем йышăнасси» текенскерне те, пĕтĕмпех тата тĕппипех пĕтерсе тăкассинчен хăраса ÿкнĕ. США делегацине пăхăнса тăма парахнă делегацисем ларакан ретсем çине вăл сивĕ куçпа пăхса илнĕ. Унтан Боэн, пурне те ĕнентерме хăтланса, США делегацийĕ тата 11 çĕршыв тăратнă резолюцин авторĕсем нумай тÿрлетÿсемпе килĕшрĕç, текех ун пек тÿрлетÿсемпе килĕшме, текех проекта улăштарма пултараймаççĕ, тесе асăрхаттарнă.

Хăйсен резолюцийĕ путланса ларнине шута илсе, США, Великобритани тата Франци представителĕсем «хăйсен сăнсăпатне» мĕнле те пулин çăлса хăварма пур майсемпе те хытă тăрăшнă. Вĕсем Совет Союзĕн «коллективлă мерăсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитета» салатса яма палăртакан тĕнчери лару-тăрури хальхи йывăрлăхсене сирсе яма мĕнле ĕçсем тумалли çинчен тата пуринчен малтан Корейăри вăрçа чарса лартас пирки пыракан калаçусене ăнăçлă вĕçлеме мĕнле ĕçсем тумалли çинчен сÿтсе явма Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта йĕркеллĕ пулса пымалли ларăвĕсене пĕр тăхтаса тăмасăрах ирттерме тытăнма палăртакан резолюцине сирсе ярасшăн, делегацисен ытларахăшне Совет Союзĕн резолюци проектне хирĕç сасăлаттарасшăн пĕтĕм вăя хурса тăрăшнă. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Совет делегацийĕ Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта йĕркеллĕ пулса пымалли ларăвĕсене пĕр тăхтаса тăмасăрах ирттерме тытăнмалли çинчен панă сĕнĕве нумай делегацисем, уйрăмах арабсен çĕршывĕсен делегацийĕсем ырланă. Арабсен çĕршывĕсен представителĕсем çакна палăртнă: аслă державăсен тĕнчери лару-тăрăва йывăрлатнă тавлашуллă çивĕч ыйтусене пĕр-перинпе килĕштернĕ тăрăх хăвăртрах йĕркелеме халех май тупма тăрăшас пулать, тенĕ.

Совет Союзĕн резолюцине уççăнах сирсе яма хăраса, США делегацийĕ тĕрлĕ маневрсем тума тытăннă. Вăл Англи, Франци тата Бразили делегачĕсемпе пĕрле Совет Союзĕн сĕнĕвĕсен пĕтĕм текстне улăштаракан «тÿрлетÿ» сĕннĕ. Çав «тÿрлетĕве» вĕсем пĕтĕмпех пăтраштарса пĕтерсе çырса хатĕрленĕ, унта Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвĕсене вăхăтран вăхăта пухма май пурри çинчен асăннă, ун çинчен Уставрах каланă ĕнтĕ. «Тÿрлетÿре» Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвĕсенче мĕн çинчен сÿтсе явмалли çинчен йĕркеллĕ калани çук. Çакăнпа США делегацийĕ тата ун майлă тăракансем тĕнчери лару-тăрури хальхи йывăрлăхсене пĕтерме килĕшменнине, Корейăра мир тăвас ĕçе хăвăртрах тата ăнăçлă йĕркелеме пулăшма килĕшменнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕç. Америка «тÿрлетĕвĕнчен» сĕмсĕрленсе кайнă агрессорсен хăлхисем курăнса тăраççĕ.

Çав тÿрлетĕвĕн» тĕп шухăшне пытарма тата Совет Союзĕн позицине пачах тĕрĕс мар кăтартма, çапла майпа совет делегацийĕн резолюцине сирсе ямалли решени йышăнтарасшăн пулса, Франци делегачĕ Совет Союзне хирĕç элеклĕ сăмахсем каласа тултарнă, вăл нумайччен каланă. Комитет председателĕн ирĕксĕрех ăна чарма тивнĕ. Комитет председателĕ ăна ку ыйту тăрăх пĕтĕмĕшле дискусси вĕçленни çинчен, Франци делегачĕн ку е тепĕр резолюцишĕн мĕншĕн сасăлама килĕшнипе сасăлама килĕшменни çинчен çеç каламалли çинчен асăрхаттарнă. Çавăн пек асăрхаттарнă пулин те, Франци делегачĕ çаплах ку ĕçпе çыхăнман айван сăмахсем каланă, СССР позицине пăсса кăтартма хăтланнă.

Çавăн пирки СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский Францин иртĕнсе кайнă представительне хирĕç ответлеме сăмах ыйтнă. Правилăсем тăрăх, ку ыйтупа тухса калама сăмах памалла мар пулин те, совет делегачĕ ыйтнипе килĕшнĕ. Ăна сăмах панă. Вăл Франци делегатне хирĕç ответ пама сăмах илнĕ.

## А. Я. Вышинский сăмахĕ

Господин Франци представителĕ, пĕрремĕшĕнчен, пурте пĕр саслă пулса решени йышăнма кирли, вето текен право законлă япала пулнине йышăнчĕ. Ку паллах ĕнтĕ, малалла чылай пысăк утăм туни, хăшпĕр чухне уроксем усăсăр пулманнине, хăшпĕр чухне вĕсем усăллă результатсем панине кăтартса паракан утăм пулать.

Анчах çав вăхăтрах вăл вето текен право пулмалли принципа йышăнасси—пĕр ĕç, ку ветопа усă курасси—тепĕр ĕç, тесе каларĕ.

Вăл, куратăр-и, вето правипе тивĕççĕр ĕçсем тума усă курассине хирĕç иккен.

Анчах кунта та вăл хăшпĕр таран каяллла чакрĕ. Вăл малтан пирĕн пирки Хăрушсăрлăх Советĕнче эпир 50 хутчен вето правипе усă курса ĕçсене чарса лартнă, терĕ. Унтан вăл вето правипе «50 хут е 30 хут усă курни, çапах та вăл пурпĕрех» терĕ. Çакă та вăл малалла кайни пулать. Вăл çавăн пек малалла кайнине эпĕ ырлатăп, мĕншĕн тесен унтан тĕрĕслĕх патне, чăнлăх патне çитесси тата тепĕр утăм юлать. Ăста чăнлăх, унта кирек хăçан та суйнă çĕртинчен лайăхрах.

Малалла вăл ман сăмахсем çинчен каларĕ. «Коллективлă мерăсем» тенисем вĕсем, чăннипе, çĕнĕ вăрçă хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пулнине эпĕ хамăн сăмахсенче уйрăмах палăртма тăрăшни çинчен каласа пачĕ вăл. Вăл кун пек калани питĕ тĕрĕс. Анчах Франци представителĕ, хăй енчен, «коллективлă мерăсем йышăнасси» текенскерсем чăннипех те çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли, мĕнле те пулин çĕнĕ агресси хатĕрлемелли план пулманнине кăтартса пама пултарнă пулсан, çавна тума тăрăшнă пулсан, эпĕ савăннă пулăттăмчĕ. Вăл çавна тумарĕ, вăл хăйĕн мĕнпур хитре сăмахĕсемпе, хăйĕн мĕнпур майĕсемпе вăхăтра усă курман пирки, паллах, пăшăрханмалли çеç юлать. Калама май пур чухне вăл нимĕн шарламасăр тăман пулсан, ку ыйтусем тăрăх нимĕн шарламасăр тăма май пур чухне вăл каламан пулсан, вăл çав мĕнпур хитре сăмахсемпе, мĕнпур майĕсемпе усă курма пултаратчĕ. Кун пирки Франци делегатне комитет председателĕ те асăрхаттарчĕ.

Франци представителĕ совет делегацийĕ тăратнă резолюци проекчĕ пирки те каларĕ. Вăл, куратăр-и, Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвĕсене вăхăтран вăхăта йĕркеллĕ пухса ирттерессине хирĕç иккен, çав ĕçе Совет Союзĕн резолюци проектĕнче сĕннĕ пек туса пырасшăн мар иккен. Анчах Совет Союзĕн резолюци проекчĕ çавнашкал вăхăтран вăхăта час-часах ирттермелли ларăва пĕр тăхтаса тăмасăрах пухма сĕнет. Франци делегачĕ шăпах та ĕнтĕ ларăва пĕр тăхтаса тăмасăрах пухмалла тенине хирĕç. Çавăн çинчен каланă чухне, вăл, сăмахран, хăйĕн пысăк чăтăмлăх пур тесе каларĕ. Корейăри калаçусем утă уйăх хушши пыраççĕ, анчах унтан халиччен нимĕн усси те пулмарĕ пулсан, вара тепĕр утă уйăх тÿссе пурăнмалла иккен. Анчах эпир шутланă тăрăх, ку ыйту çине чăннипех те тимлесе пăхсан, пĕр-пĕрине тăрăхласа тавлашас енĕпе пăхмасан, чăнласах шутлакан кирек мĕнле çынишăн та çакă уççăнах паллă. Пальмыньчжоньри пек калаçусенче чăтăмлăх мĕнле пуласси кăна мар шута илмелле, кун пек калаçусене пур майсемпе те васкатма, калаçусем ăнăçлă вĕçленмелле тăвассишĕн тăрăшмалла.

Франци делегачĕ, çавăн пекех Совет Союзĕн делегацийĕ сĕннĕ резолюци проектĕнчи ку пункта хирĕç тăракан ытти хăшпĕр делегатсем те, Корейăри калаçусене хăвăртрах ăнăçлă вĕçлеме кирлине тата эпĕ ĕнер уйрăмах чарăнса тăнă тата ăнлантарса пама тăрăшнă шухăша асра тытмаççĕ.

Чăннипе илер-ха. Корея ыйтăвне йĕркелес ĕçе Хăрушсăрлăх Совечĕн хутшăнмалла тесе, эпир мĕн тума сĕнетпĕр-ха? Ку ыйту хальхи вăхăтра мĕнле тăнине кура, эпир пирĕн Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн органĕ пулса тăракан Хăрушсăрлăх Совечĕн хăйĕн пĕтĕм авторитечĕпе Корейăра пыракан калаçусене ăнăçлă вĕçлеме май килнĕ таран пулăшмалла, тетпĕр.

Пирĕн сĕнĕве хирĕç пыракан Франци представителĕ е пĕр-пĕр урăх делегат никама та ним енчен те пулăшма кирлĕ маррине çирĕплетсе кăтартса патăрччĕ. Вĕсем хирĕç каланин шухăшĕ, чăннипе, çавăн пек ĕнтĕ. Пире çапла калаççĕ: «вăл калаçусене васкатма, калаçусене ăнăçлă вĕçлемелле тăвассишĕн тăрăшма кирлĕ мар», теççĕ. Анчах эпир Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта йĕркеллĕ пулса пымалли ларăвĕнче е тепĕр чухне, тен, Генеральнăй Ассамблейăра Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн,—Корейăра унăн ялавĕпе витĕнсе вăрçаççĕ,—хăйĕн сăмахне каламалла тăвасшăн, ку ыйту хыççăн сÿтсе явма тытăнмалли, кун йĕркинчи тăваттăмĕш пункт тăрăх хамăр тăратакан сĕнÿсенче эпир çавăн пек тума сĕнетпĕр те. Генеральнăй Ассамблея Корейăри вăрçа хутшăннă çĕршывсене çапăçма чарăнас тĕлĕшпе ку е тепĕр ĕçсене тума хушса сĕнÿсем пама йышăнатăр тесе эпир çине тăратпăр.

Пирĕн резолюци проектне эсир пĕлетĕр. Çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха çирĕплетмелли мерăсем çинчен тăракан ыйту тăрăх эпир хатĕрленĕ проектра эсир çав пункта вуланă. Эпир Генеральнăй Ассамблейăна çапла тума сĕнетпĕр: Генеральнăй Ассамблея Корейăра юн юхтарса çапăçассине чарса лартма пулăшакан сĕнÿсем йышăнтăр. Кун йĕркинчи тепĕр пункта сÿтсе явнă чухне эпĕ кун çинчен тĕплĕ каласа парăп.

Эпир миршĕн сăмахпа мар, ĕçпе, чăннипех те, тăратпăр, **ăста май илет, унта** пур çĕртре те Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ умне мире хÿтĕлес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма, ку ĕçе активлă туса пыма ыйтса требовани лартатпăр.

Ку ĕçе Генеральнăй Ассамблейăра тума май килет пулсан,—эпир вара ку ыйтăва унта лартатпăр, унта хамăр сĕнĕве йышăнма ыйтатпăр, ăна йышăнтарассишĕн тăрăшатпăр, хамăр сĕнÿшĕн кĕрешетпĕр.

Хăрушсăрлăх Совечĕн вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларăвĕсене çÿлĕ пусăмра ирттерме сĕнетпĕр, вĕсене пĕр тăхтаса тăмасăрах пухмалла, Корейăри вăрçа чарса лартасси çинчен пыракан калаçусене ăнăçлă вĕçлеме мĕнле ĕçсем тунипе, мĕнле майпа пулăшасси çинчен халех сÿтсе явмалла. Çапла майпа Корея пирки тăракан пĕтĕм ыйтăва мирлĕ майпа йĕркелеме çул уçса памалла.

Пирĕн сĕнĕвĕн мире юратса каланă пархатарлă шухăшне тата пĕлтерĕшне пĕчĕк ачасем те çăмăллăнах ăнланса илме пултараççĕ. Çавăнпа та эпĕ хăшпĕрисем çакна ăнланса илесшĕн мар теместĕп, хăшпĕрисем çакна йышăнасшăн мар, тетĕп.

Халĕ пирĕн резолюци проектне тÿрлетÿсем кĕртме сĕннĕ. Çав тÿрлетÿсем çинчен эпĕ пирĕн резолюци проектне сÿтсе явма тытăнсан каласа парăп.

Çавăнпа та кунта Франци представителĕ кăларса тăратнă сăлтавсем тата каласа панă шухăшсем пĕри те тĕрĕс мар. Франци представителĕ хăйĕн шухăшĕсене, хăйĕн политикăллă хăшпĕр тĕп шухăшĕсене йĕркеллĕ каласа пама хăтланчĕ пулсан, вăл каланисем пачах тĕрĕс мар. Вăл вăхăтран вăхăта пулса пымалли ларусене ирттерниччен усă пулмасть тесе каланине итлеме те май çукчĕ.

Тĕнчери лару-тăрăва лайăхлатма тăрăшман çынсем, Хăрушсăрлăх Совечĕ пĕр тăхтаса тăмасăрах вăхăтран вăхăта ирттермелли ларăва пухăнассинчен хăракан, Корея ыйтăвне хăвăртрах йĕркелессине хирĕç, çапăçусене чарса лартасси çинчен пыракан калаçусене ăнăçлă вĕçлессине хирĕç тăракан çынсем хăйсен сăмахĕсемпе ĕçĕсем пурнăçланассине шанманнине, паллах, ăнланса илме пулать ĕнтĕ.

## Хĕвеланăç Германири халăх „Шуман планне" йышăнассине хирĕç тăрать

БЕРЛИН, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Дюссельдорфран пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Германири халăх Бонри правительствăра пуç пулса тăракан партисем «Шуман планне» çирĕплетме шутланине хирĕç кĕрешет. Ку кĕрешÿ вăйланса пырать.

Гельзенкирхенри «Норштерн» шахтăра ĕçлекен рабочисен коллективĕ хăйĕн пухăвĕнче Бонри парламент «Шуман планне» çирĕплетес пулсан забастовка тума йышăннă. Пухура йышăннă резолюцире: çĕнĕ вăрçă тухассине сирсе ярассишĕн рабочисен тата мĕнпур халăхăн пĕтĕм вăя парса кĕрешес пулать, тенĕ. Резолюци Гельзенкирхенра пурăнакансене январĕн 12-мĕшĕнче «Шуман планне» хирĕç тата Бонри влаçсем Германири коммунистсен партине чарса лартма шутланине хирĕç протестлемелли митинга пыма чĕнет.

Мюльгеймри «Мюльгейм-Мейдерих» текен металлурги завочĕн коллективĕ ĕнер «Шуман планне» хирĕç протестленĕ ятпа кĕске вăхăтлăх забастовка ирттернĕ.

## Шкул ачисен хĕллехи спартакиади вĕçленчĕ

Çак кунсенче Шупашкарта шкул ачисен республикăри спартакиади пулса иртрĕ. Унта 19 районпа хуларан килнĕ 200 çамрăк хутшăнчĕ.

Малтанхи кун йĕлтĕрпе 10 километра ăмăртса чупрĕç. Ăмăртура Йĕпреçри вăтам шкулта вĕренекен Н. Поликарпов малти вырăна тухрĕ. Çак дистанцие вăл 43 минут та 29 секундра чупса тухрĕ. Советскинчи вăтам шкулта вĕренекен А. Николаев иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Хĕрачасем 3 километра ăмăртса чупрĕç. Çак дистанцие Йĕпреçри вăтам шкулта вĕренекен М. Герасимова чи малтан чупса тухрĕ.

Иккĕмĕш кунне арçын ачасем 18 километра ăмăртса чупрĕç. Çак дистанцире те Йĕпреç район представителĕсем Поликарповпа Слаборуков хăвăрт чупса тухса, пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Вăрнарти вăтам шкул представителĕ А. Кузнецов çак дистанцире виççĕмĕш вырăна тухрĕ.

Хĕрачасем пилĕк километра ăмăртса чупасси пуçланчĕ. Çак хушша пуринчен малтан Шупашкарти хĕрачасен 4-мĕш вăтам шкулĕнче вĕренекен Охтярова чупса тухрĕ. Унăн вăхăчĕ 25 минут та 30 секунд. Ку вăл пĕрремĕш разряд норми чухлĕ пулать. Иккĕмĕш вырăнта В. Игумнова (Çĕрпÿри вăтам шкул), виççĕмĕш вырăнта М. Коннова (Çĕмĕрле).

Трамплин çинчен сикнĕ чухне Шупашкарти иккĕмĕш вăтам шкулта вĕренекен Николаев лайăх тĕслĕх кăтартрĕ, вăл 38 метр та 50 сантиметр тăршшĕ сикрĕ.

Конькипе хăвăрт чупас тĕлĕшпе ăмăртнă чухне кĕрешÿ вăйлă пулчĕ. Шкул ачисем 500, 1.500 тата 3.000 метра ăмăртса чупрĕç. Çак дистанцисенче Улатăр хулинчи вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕренекен Г. Вильдяев лайăх тĕслĕх кăтартрĕ. Хĕрачасенчен, 250 метр тата 500 метр ăмăртса чупса, Вăрмарти вăтам шкул представительници Лина Куприянова мала тухрĕ.

Гимнастика енĕпе ирттернĕ ăмăртусенче те чылай вĕренекенсем паха тĕслĕх кăтартрĕç.

Спартакиадăра хуласенчен Шупашкар хула команди пĕрремĕш вырăна тухрĕ, иккĕмĕш вырăнта—Етĕрне хула команди.

Районсенчен пĕрремĕш вырăна иккĕмĕш хут Вăрнар район команди йышăнчĕ, иккĕмĕш вырăнта—Вăрмар районĕн, виççĕмĕш вырăнта—Чкаловски районĕн командисем.

## Стена хаçачĕсене премилепанă

ОКТЯБРЬСКИ. ВКП(б) райкомĕпе районти «Хĕрлĕ Октябрь» хаçат редакцийĕ колхозсенче тата артельсемпе учрежденисенче тухса тăракан стена хаçачĕсен выставкине ирттерчĕç.

Çак кунсенче ятарласа тунă комисси выставкăна тăратнă стена хаçачĕсене тĕплĕ пăхса тухрĕ. Вăл «Культура» колхозри «Стахановец» ятлă стена хаçачĕ уйрăмах лайăх тухса тăнине палăртрĕ, çак хаçатăн редакторне П. Андреев юлташа пĕрремĕш премипе—125 тенкĕ укçа парса премилерĕ. «Стахановец» стена хаçачĕн паха опычĕ çинчен районти хаçатра тата выставкăсенче анлăн сутатма кирлине палăртрĕ.

Иккĕмĕш премие «Новый быт» колхозри «Ялав» стена хаçачĕн редакторне А. Авдеев юлташа пама йышăннă. «Ялав» стена хаçачĕ иртнĕ 1951 çулта çураки вăхăтĕнчен пуçласа лайăх тухса тăма тытăннă. Вăл колхозниксене ĕçе мобилизацилес тĕлĕшпе колхозра пысăк вăй пулса тăнă, критикăпа самокритикăна анлăн сарса пынă.

Виççĕмĕш премие Сталин ячĕпе тăракан колхозри «Сталинец» стена хаçат редакторне А. Чугунова юлташа памалла тунă. «Сталинец» хаçат иртнĕ 1951 çулта пурĕ 42 номер тухнă. Стена хаçатне çырас ĕçе колхозри коммунистсемпе комсомолецсем, колхоз ĕçĕнче малта пыракансем активлă хутшăнаççĕ.

**В. АНДРЕЕВ.**

## Ĕссĕр тăрса юлнисен йыше пысăкланнă

БОНН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германири ДПА агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче Хĕвеланăç Германире ĕçсĕр тăрса юлнисен йышне çĕнĕрен 346.957 çын хутшăннă. Çапла вара, 1951 çул вĕçленнĕ тĕле ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ пĕтĕмпе 1.653.553 çынна çитнĕ.

## Пĕлтерни

Январĕн 11-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕнче докладчиксемпе агитколлектив руководителĕсем валли доклад пулать. Тема: «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе».

Докладчик — ВКП(б) обкомĕн лекторĕ Г. Ф. Царев юлташ.

* * *

Январĕн 11-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕнче марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм произведенийĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекци пулать. Тема: «В. И. Ленинăн «Империализм капитализмăн чи çÿлти сыпăкĕ» ятлă произведенийĕн марксизма аталантарас ĕçри историллĕ пĕлтерĕшĕ»

Лектор—П. Л. Лебедев юлташ.

* * *

Январĕн 11-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсемпе усă курса иккĕмĕш çул вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «Большевиксен партийĕ социализмлă общество туса çитересси тата Çĕнĕ Конституцие пурнăçлассишĕн кĕрешни».

Семинар руководителĕ—А. И. Воробьев юлташ.

**ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.**

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ял хуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00308 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.